# КАПКАН

10-мӗш №
ОКТАБӖР
1936




Ниу-Йоркра тухакан „Дейли уоркер“ журнал ҫинче тухнӑ ӳкерчӗк („За рубежом“ журналтан илнӗ).

Чаваҫҫӗ.

# Ашран тунӑ пропагандӑ



Польшӑ урлӑ Совет Союзӗнчен таврӑнакан Генке йатлӑ ҫамрӑк ҫынна Германири штурмовиксем чикӗ урлӑ каҫнӑ чухне тытнӑ та, ухтарма тытӑннӑ.

Ҫитти вырӑнне унта тухакан „Ангриф“ йатлӑ хаҫат сарнӑ сӗтел ҫинче чӗлӗмпе тапак йенчӗкӗ выртаҫҫӗ. Генкен ҫамки хӑпарса тухса кӑвакарнӑ. Штурмовиксенчен пӗри Генкен пальто кӑсйинчен пилӗк кукӑль пӗр харӑс туртса кӑларсан, савӑннипе, кӑшкӑрсах йачӗ:

— Тӑхтӑр! Тӑхтӑр! Тупӑнчӗ!.. Пуҫлӑхсене систермеле. Есӗр мар, епӗ тупрӑм.

— Мӗн тупрӑн?

— Ухмах! Курмастӑн-и, большевиксен пропаганди.

— Ҫавӑ пропагандӑ-и, кукӑль-и?

— Ҫавӑ ҫав! Кукӑль ҫав! Пӗрне хуҫса пӑх-ха — ашран тунӑ ӑна. Епӗ пуҫлӑх патне чупам. Пропагандине сӗтел ҫинчен ан илӗр.

Темиҫе минутран Вилли Шредӗр пырса кӗчӗ. Вилли Шредӗр кусенчен кӑштах аслӑраххи иккен. Пилӗк кукӑле курсан, вӑл Генке ҫине сиксех ӳкрӗ.

— А-а! Шуйттан! Пропагандӑ чиксе ҫӳретӗн. Большевисӑм кӳресшӗн. Кала ӑҫтан тупрӑн, ӑҫтан тупрӑн пропагандӑна?

— Мӗнле пропагандӑна? — хӑйусӑрӑн ыйтрӗ Генке.

— Ак ҫакна, ашран тунине! — ура тапса аллисене силлесех кӑшкӑрса тӑкрӗ ӑна хирӗҫ Шредӗр.

— Ӑна-и? Ӑна... лере.. Совет Союзӗнче сутӑн илтӗм. Пит тутлӑн туйӑнчӗ те, Польшӑ урлӑ каҫарса кунтах илсе килтӗм. Ыттисене ҫул ҫинче ҫисе йатӑм, йулашки пиллӗкӗшне чикӗ урлӑ каҫсанах ҫийес тенеччӗ те, сирӗн ҫынсем чарчӗҫ.

— Сутӑн илтӗм тетӗн? Суйатӑн! Сана ӑна Коминтерн укҫасӑрах панӑ. Ҫийӗнчен кунта илсе килнӗшӗн сана уншӑн укҫа нумай тӳленӗ. Тытса кайӑр ӑна. Пропагандине сӗтел ҫинчех хӑварӑр. Хуралта пуҫлӑх киличчен хам тӑрӑп. Марш!

Генкена штыксемпе сыхласа илсе тухаҫҫӗ.

Кусем кайнӑ хыҫҫӑн Вилли Шредӗр алӑксене хупрӗ те, пуҫлӑхӗ патне донесени ҫырчӗ. Унтан револьверне кӑларса ҫаврӑкаласа сӑнаса пӑхрӗ те, каллех сӗтел хушшине ларса шухӑша кайрӗ.

Умӗнче аш куклисем, илемлӗн выртаҫҫӗ.

— Иш, шуйтансем! — илтӗнмеле шухӑшлама тытӑнчӗ, хамӑрӑн тӑватӑ ҫуллӑх план тӑрӑх, Германи ҫыннисен аш ҫиме пӑрахмала. Сирӗн ҫиме аш ҫук, пирӗн нумай, тесе каппайса, большевиксем Германи ҫӗршывне килме тухнӑ ҫынсене укҫасӑрах аш куклисем парса йараҫҫӗ. Сӗт-ҫу, аш-пӑш ҫукшӑн кунта пӑлхав кӑларасшӑн... Пит чейен ӗҫлеҫҫӗ. Епӗр тата чейерех — пропагандӑ чиксе килнӗ ҫынна тытрӑмӑр. Куншӑн мана наградӑ пулӗ-ха. Наградӑ укҫипе аш илетӗп те, арӑма ҫакӑн пек кукӑль пӗҫерттеретӗп. Е-ех, кашни уйӑхрах доход пӗр виҫҫӗршер маркӑран кайа мар илсессӗн, аш куклисем ҫимесӗр пурӑнас ҫукчӗ те... Пит нумай пулӑт аш-пӑш ҫисе курманни. Ҫулталӑк та ҫитет пулӗ. Тьфу! Ку ашран тунӑ пропагандӑ ҫине пӑхса ларнӑ хушӑра сӗлехесем йухса анма тытӑннӑ.

Кукӑль ҫинчен шухӑшлама пӑрахас тесе, умӗнче выртакан „Дер дейче фольксвирт“ журнала тытса вулама тытӑнчӗ. „Пирӗн апат-ҫимӗҫ ытлашши паха пулни кирлӗ мар, хура ҫӑкӑр ҫисе пурӑнмала. Сӗт-ҫу, аш-пӑш тавраш ҫийес килсессӗн те, вӗсемсӗрех пурӑнма вӗренни кирлӗ. Германи халӑхӗн хӑйне кирлӗ ҫимелисене сахалрах ҫинипех пурӑнма хӑнӑхмала“ тенисене вуланӑ хыҫҫӑн, сӗтел ҫинче выртакан шап шур кукӑльсем ҫине ирӗксӗрех пӑхса илчӗ те, урӑх вулама пултараймарӗ.

Кукӑлӗсене хыт аллипе хыпашлакаласа пӑхрӗ.

— Тулӗ ҫемҫе, хытӑ мар иккен. Пулӑт халӑх! Возванисем салатаҫҫӗ, аш куклисем пӗҫереҫҫӗ... Возванисене вуламан, анчах, тӗрӗссипе каласан, ҫак аш кукли тенине ҫулталӑк ытла хырӑма йарса курман. Тьфу!

Йухса аннӑ сӗлехисене шӑлса илчӗ те, кукӑльсене аллипе тытса хӑй патнерех шутарса хучӗ. Унтан каллех илтӗнмеле шухӑшлама тытӑнчӗ:

— Пӑхсассӑн — кукӑль, хӑй — пропагандӑ. Совет Союзӗн аш-пӑш нумайии, фашиссен — ҫителӗксӗрри ҫинчен каласа паракан кукӑльсем... Ку шур чусталлӑ пропагандӑна тутанса пӑхсан мӗнле-ши? Тути пур-ши унӑн, ҫук-ши?

Шредӗр пӗр кукӑлне сӑмсинчен ҫыртса илсе васкавлӑн чӑмласа ҫӑтса йачӗ.

— Тути пит селӗм!

Тата ҫыртса илчӗ.

— Кунта пропагандӑ ҫуккӑн туйӑнчӗ, — терӗ иккӗмӗш кукӑле ҫиме тытӑннӑ майӑн.

— Аван пӗҫернӗ. Ха! Пулӑт вӗт халӑх! Шурӑ чустапа ашран пропагандӑ пӗҫерсе салатаҫҫӗ.. Леш, Коминтерн тени тӑват ӗнтӗ ӑна. Хӑй мӗнлескерши вӑл, ҫамрӑкскер-ши? Рабочисемпе хресченсемшӗн тӑрӑшсах вӑхӑт иртерет, теҫҫӗ.

Виҫҫӗмӗш кукӑлӗ хырӑмне кӗрсе вырнаҫнӑ хыҫҫӑн, тӑваттӑмӗшне йарса илет.

— Ҫулталӑкӗпе ҫисе курман. Епӗ хам та кунта киличчен хресчен ҫынни пулнӑскер... Ех, ҫавӑн пек тутлӑ аш куклисем пӗҫерекен Коминтерн пирӗн хамӑрӑн пуласчӗ... Пурнӑҫ вара ӑраснах урӑхланӗччӗ... Хӑвӑншӑн ху хуҫа, кам ӗҫлемест — вӑл ҫимест, кам ӗҫлет — вӑл ҫийет... Кунта... Тьфу! Мӗнле капла кирлӗ мар сӑмах ҫӑвартан тухса карӗха? Никам та илтмерӗ пулсан йурӗ...

Пиллӗкӗмӗш кукӑль тӗпренчӗкӗсене тумтир арки ҫинчен шӑлса тӑкнӑ хыҫҫӑн, Шредӗр пуҫлӑх патне ҫырнӑ донеҫени хутне татӑкӑн-татӑкӑн туса ҫӗтсе тӑкрӗ. Унтан тутлӑн анасласа, тӑрӑхла сак ҫине тӑсӑлса выртрӗ.

— Генке ухмах! — терӗ вӑл куҫӗсем хупӑннипе хӑй ҫывӑрса кайнӑ май. — Ма вӑл ун йышши тутлӑ пропагандӑна пиллӗк ҫеҫ илсе килнӗ!.. Е-ех!..

**Иван Мучи.**

# Çывăракан ашшĕпе ачасем

Мăн Етмен (Хĕрлĕ Чутай р) йалповĕ растратăсем айне путнă, кирек хăш йенчен те начар ĕçлет.



— Ытла шавлатăр, ачасем! Аçуна вăрататăр!

— Ан хăра! Вăратас çук. Иртнĕ пухура пĕр оратăр Мăн Етмен йалповĕн правленинче ларакансене тупă сассипе те вăратас çук, терĕ.

---

## 25-мĕш помошник

Епĕ çураласcах артис пулса çуралнă, анчах кайран пултарулăха манне йытă кăшласа кайнă. Çавăнпа епĕ... сценă çинче, айакри пурнăçри номĕрсене тăваканни епĕ. Çавах та епĕ театăр таврашĕнчен айакках каймастăп, пайан та ак директăрăн 25-мĕш помошникĕ пулса ĕçлетĕп. Пурнăç ман лайăх, укçа нумай илетĕп, сăран пиншак, шĕлепке тăхăнмасăр çÿреместĕп. Хăлхуна кунтарах пар-ха пăштăн калам! Пурăнма пĕлес пулаť, йулташ, пурăнма!.. Иртнĕ çулла епĕ чăвашсен академилĕ театăрĕн вырăс труппипе Дзержинск йатлă хулана карăм. Ытлашшийех ачасене хăваласах ĕçлеттермерĕм, мĕскер—май килнĕ чухне канччăр-иç, 45 кунта та 15 çпектакăљ аран лартрăмăр, а мĕскер —укçине параççĕ вĕт. Киле килнĕ чухне пĕрре пуйас, терĕм. Артиссем кайса пĕтсен квитанципе труппă багажне пристăнрен кайала илтĕм те, кирлĕрех хаклă тумсене йешчĕкрен кăларса туртта тăм, вырăнне çав виçелĕ чул чиксе хутăм. Анлантăн-и?.. Шупашкара çитсен çынсемпе пĕрле епĕ те тĕлĕнтĕм йепле чул кĕрсе выртни çинчен, нихăшĕнчен хытăрах çăвара карса пăрахрăм. Чăнах та йепле-ха лайăх тумтирсем вырăнне сăхман варне чул чĕркенĕ-ха, тесе тăратăп. Мана унщăн нимĕн те пулман. Халĕ акă тир савăтĕнчен атă тума сарă тир виçĕ тенкĕ парса илтĕм, кайса пăх-ха,—сана параççи? Вот, йулташ, çапла, пурăнма пĕлес пулаť! Театăрта пирĕн шĕлепкесем нумай, пуринчен пĕр шĕлепке тăватăп та тăхăнтаратăп, чăваш труппи ăшăнса лартăр. Пурăнма пĕлес пулаť, йулташ, пурăнма!

Хамăрсем.

# Шишкă



Ҫентабĕрĕн 25-мĕшĕнче чăвашсен паллă писателĕ, Совет писателĕсен Союзĕн членĕ Хумма Ҫеменĕ (Чĕкеҫ) вăхăтсăр вилчĕ.

„Шишкă“* тесе вырăссем пĕр-пĕр мăкăԓ йапалана калаҫҫĕ. Сăмахран, хыр йĕкелне, чăрăш йĕкелне „сосновая шишка“, „еловая шишка“ теҫҫĕ. Ҫавăн пекех, ҫын йе выԓăхчĕрлĕх шыҫăнса кайсан, ÿт ҫинче час-часах мăкăԓ сиксе тухат̌. Ăна та „шишкă“ теҫҫĕ. Вăл вара пĕре те ыр йапала мар. Ҫавăнпа ăна тепĕр тĕрлĕ те калаҫҫĕ. Сăмахран, „инкек“, „чир“, „сийен“, „усал“, тата урăх йат та пур унăн. Епĕ вĕсем ҫинчен ҫырасшăн мар. Вĕсем, маншăн пулсан, питех „интереснă“ мар.

Пурнăҫра урăх йышши „шишкăсем“ те пулаҫҫĕ. Калăпăр, хамăр хушăмăрти чипер сывă ҫынах акă, темле хăватпа трук обчă ҫинчи мăкăԓ... хамăртан кĕретех уйрăм, хăйне-хăй „пысăк“ ҫын пулса тăрат̌. Вырăссем ăна та „шишкă“ теҫҫĕ. Ман шутпа, чи усал „шишкă“—ҫак кайран асăнни пулат̌. Хаԓхи вăхăтра ун пек „шишкăсем“ курăнкалаҫҫĕ. Ун ҫинчен килтен тухман йалти ватă карчăк та илтнĕ, тет.

Пĕрре, пирĕн килте, кÿршĕ-хурăнташ ҫыннисем пухăннă та, „шишкăсем“ ҫинчен халапласа ларнă.

— Мĕн пулат̌ вара вăл „шишкă“ тени?

— Прахха ывăлĕ, Кĕркури... Урăхла каласан, йал председателĕ, тени пулат̌.

— Е-е-е! тенĕ асанне.

„Шишкăсене“ йалта кăна мар, вулăсра та, уйесре те, Шупашкарта та тупма пулат̌. Тен, Мускавра та пулĕ? Пĕлместĕп унтине. Хам кайса курман та—улталама пултараймастăп.

Хăйсем вĕсем „шишкă“ тенĕшĕн ҫиленеҫҫĕ. Вĕсене мухтас пулат̌. Вĕсем умĕнче ҫукаланни кирлĕ.—Есĕр аслă ҫын, есĕр пурнăҫа йертсе пыратăр... Ой, есĕр геройсем! тесен, вĕсем сан умăнта ирĕлсе кайнă пек пулаҫҫĕ. Пуканĕсем ҫинче чипер ларнă ҫĕртенех, улпутла тайанса ÿкеҫҫĕ те, кăмăллăн кулма тытăнаҫҫĕ. Ун пек чух вĕсем сана вырăн тупса пама та хатĕр. Шалу ÿстерсе пама та пултараҫҫĕ. Ой, майне ҫеҫ пĕлес пулат̌ ун пек чух...

Анчах хурлама, хирĕҫрех тăма тытăнсассăн, пĕтрĕ вара сан пурнăҫу! Сана пайанах вырăнсăр тăратса хăварма пултараҫҫĕ.—Кĕрĕн пирĕн алла! тесе чăмăрласах кăтартаҫҫĕ. Ҫавăнпа та „шишкăран“ хăраҫҫĕ. Пĕр епĕ анчах, ухмах пек пулса, „шишкă“ ҫинчен ҫырма хăйас, терĕм.

## I.

„Шишкăна“ тухиччен, йалти ҫынсем ăна: Ваҫлей, тетчĕҫ. Ревоԓуци умĕн вулăса писсăре кĕрсессĕн,—Ваҫлей Иванч, тесе чĕне пуҫларĕҫ. „Шишкăна“ тухсан, пĕр сасăпа: Шишкă, тесе ҫĕн йат пачĕҫ. Тÿррипе каласан, хăйне „Шишкă“ тенĕшĕн Шишкă ҫын умĕнче кăна кăшт ҫиленнĕ пек пулат̌. Ахаԓ чух, ҫиленме мар, ҫав сăмахшăн хăйне хăй ачашлама та хатĕр. Чăнахах та, хаԓ анчах вăл йалта пурăначчĕ. Йалти ҫынсăр пуҫне, ăна никамах та пĕлекен ҫукчĕ. Халĕ... халĕ Шупашкара килсе ÿкнĕ. „Шишкă“ пулнă. Тĕлĕнмеле... Тĕлĕнмеле...

Пĕлтĕр мар, иртнĕ ҫулĕнче пулас вăл,—ун чухне епĕ тин ҫеҫ хулана килнĕччĕ,—ҫав Шишкăна чи малтан Атăл хĕрĕнче тĕл пултăм. Ҫуллахи хĕвел пуԓницă хыҫнеле шутарма тапратнă вăхăт. Учрежденисенче ĕҫсене тахҫанах пĕтернĕ. Буԓварсенче ҫынсем курăна пуҫларĕҫ. Малтанах сахаллăн, унтан нумайлансах... нумайлансах пыраҫҫĕ. Пирĕн Шишкă, пĕр ҫинҫе пилĕклĕ, пит-куҫне сăрланă, шупка шарăфне пуҫ ҫинчен усăнтарса йанă майра ҫаклатнă та, айал йенчен чиклăн утса

* Ку калава Хумма Ҫеменĕ „Сунтал“ журналта 1925-мĕш ҫулта кăларнă.

хăпарат̆. Малтанах палламала та мар. Кам-ши ку?—тетĕп. Хăй капăр тумланнă: тăвăр кунчаллă атă, галифе, пиншак, тем-тем тĕслĕ галстук, аллинче туйа. Анчах куçĕсем йалтийех: хĕсĕкскерсем, кăшт пиçсерех тăраççĕ. Сулахай аллинчи тутрипе вĕсене шăлкаласах пырат̆. Манăн темшĕн, çак Шишкăпа çăвар уçса калаçасси килсе карĕ. Хамăр йал сынĕ пулнă вĕт, тетĕп. „Шишкăна“ тухнă тесе пĕр сăмах та чĕнмĕ-ши вара мана хирĕç? Чĕнмесессĕн—чĕнмест, ыйтнăшăн ним те пулас çук. Çапла епĕ, скамйе çинче Атăл çинеле, Атăл таврашнеле пăхса савăнса ларнă çĕртен, ура çине тăратăп та, Шишкăпа çинçе майри умнеле хăйуллăн утса пыратăп.

— Васлей, ей, Васлей Иванч!

— Што надă тебе?

— Палламастăн-и вара мана?

— Што?.. Нет, незнайу!

— Хăвăр йалсемех пулатăп епĕ.

— Што?.. Нет, незнайу!

— Хăвăр йална та пĕлместĕр-и?..

Шишкă манпа, çăпаталлăскерпе, урăх калаçмарĕ. Çинçе майрине ачашшăн:

— Идем, Ленăчкă! Нечего смотреть на него... на дурр.. терĕ те, паçăрхин пекех, чинлăн утса кайрĕ. Ман çине майри кăна пĕрре сивĕ куçĕпе шăтарса пăхрĕ, хăй çавăрăнса та пăхмарĕ. Шишкă!.. Çавăн пек иккен вăл „Шишкă“. Шишкă!.. Çынна та, йалне те паллами пулса кайат̆.

Малтанах ·унтан манăн кулса йарассăм килчĕ, анчах бульвар çинчи çынсем умĕнче тата лайăх мар пек туйăнчĕ. Тен,—ăçтан пĕлен?—ыттисем те: дурр... дурр... теме пуçлĕç. Пĕтес пулат̆ вара. Таса çинченех ухмаха йерсе кайăн... Çавăнпа та, шăла çыртса лартрăм. Каллех Атăл сăрчĕ хĕррине кайса тăтăм. Шишкă çинчен çĕнĕрен шухăша карăм.

Шишкă!.. Шишкă!.. Кунта вăл халĕ апла çÿрет. Анчах килĕнчи арăмĕ унăн пĕчек ачисемпе тарăхса пурăнат̆. Шишкă ăна пăрахнă. Шишкă халĕ „вырăса“ тухнă: вăл чăвашла манса кайнă. Куçĕсем хĕсĕк, пиçĕхеççĕ пулсан та, вăл „вырăс“ халĕ. Кулмала, кулмала! Хулана килес умĕн, арăмĕ мана Васлей Иванч çинчен лайăхрах пĕлме каласа йанăччĕ. Епĕ ăна манса та кайнă. Ех, ухмах пуçăм! Мĕншĕн маларах аса илтермерĕн есĕ? Тÿрех арăмĕ çинчен каламалаччĕ манăн.—Арăму салам йачĕ, темелеччĕ. Ухмах мар-и... тепĕр йенчен тата, апла та ĕç тухас çукчĕ пулĕ. Çук. Çук! Çитменне, майри хăйпе пĕрлех,—питне сăрланă, шупка шарфне пуç çинчен усăнтарса йанă, çинçе пилĕклĕ майри...

II.

Вăл вăхăтра манăн Шупашкарта нумай пурăнмала пулчĕ. Çавăнпа Шишкă çинчен тĕплĕнтерех каласа пама пултаратăп. Еп килсессĕн иккĕмĕш ернинче пулчĕ ку ĕç... Хăйасем çутнă, çĕрле пулнă. Пĕр пĕчĕкрех урам айкипе иртсе пыратăп. Икĕ хутлă йăвăç çурт тĕлне çитсессĕн, мана пĕр шурă тутăрлă лутра хĕрарăм, тата тепĕр тăла сăкманлă ватă çын, чăвашсем, тытса чарчĕç.

— Хĕветĕр мар-и çак?

— Çав, тетĕп. Васлей Иванч арăмĕпе ашшĕ мар-и есир?

— Çавсем.

— Мĕншĕн урамра тăратăр тата?

— Ех, Хĕветĕр! Ухмах кăтартат̆ ĕнтĕ пирĕ. Çавăн пирки намăс куратпăр. Хăй арăмĕпе хăй ашшĕне те йышăнасшăн мар. Йеркĕн майрипе питĕрĕнсех илчĕç, теççĕ.

Ман мĕн калас кусене? Ним калама аптăранăран:

— Тĕлĕнмеле, тĕлĕнмеле!—тетĕп вĕсене хирĕç.

Арăмĕ хытса кайнă: ни макăрма, ним тума пĕлмест. Старикĕн куççулĕсем шăпăртатса анаççĕ. Анчах çавăнтах сăкман çаннипе шăлса типĕтет.

— Мĕн тăвас ĕнтĕ? Мĕн тăвас?

— Йепле те пулсан çĕр каçас пулат̆. Алкумĕнче выртма чармаççĕ. Йурат̆ пире унта та. Халĕ çулла, шăнса вилес çук. Ыран вара тул çуттипе, килеле шутарăпăр. Сакăрвун çухрăм утса килнĕ, тата сакăрвун çухрăм кайала кайма тивет... Ху ачу пулсассăн та, йышăнмаççĕ, тет старик кинне хирĕç.

— Атăр хам хваттере!

Вĕсем итлемеççĕ. Вĕсен шухăшĕ, вĕсен ĕмĕчĕ йалта. Ыран, *тул* çутипе, хулари çынсем хĕрсе çывăрнă *вăхăтра*, вĕсем алкумĕнчен тăраççĕ те, утаççĕ таçта айакка... тĕттĕм, канлĕ кĕтесе... Хуларан сакăрвун çухрăма.

— Атăр!—тесе чĕнетĕп татах.

Çук, итлемеççĕ.

— Есĕ чăрманаймăн ĕнтĕ пирĕншĕн. Йепле те пулсан алкумĕнчех çĕр каçăпăр, теççĕ.

Унччен манăн ăшчик нихçан та хурланса курманччĕ. Çавăн чухне хурланчĕ. Ватă старикпе çав шурă тутăрлă лутра, мĕскĕн хĕрарăм урамра хирĕç пулни ман пуçа нумайччен çĕмĕрсе тăчĕ. Нумайччен канлĕх памарĕ. Есĕр, вулакансем, ĕненместĕр пулĕ епĕ çырнине? Чăнах та, хамăн та ĕненессĕм килмест ăна. Анчах вăл чăн пулнă йапала. Чăн пулнă пирки халĕ те ман ăшран тухмаст̆.

Шурă тутăрлă лутра хĕрарăм... Шупашкар урамĕнче, икĕ хутлă йăвăç çурт тĕлĕнче, çĕрле, хăйасем çутсан, мана пÿлсе чарнă мĕскĕн чăваш хĕрарăмĕ! Сана аса илсенех, ман ума Тургенĕвĕн Кулине йатлă хĕрарăм геройĕ сиксе тухат̆. Кулине, кĕркунне, хурăн вăрманне каччипе курăнма пынă. Каччи, улпут лаккейĕ, хĕрĕ тилмĕрсе сăмах ыйтнă вăхăтра, курăк çинче шăхăрса мăшкăласа кăна выртат̆. Вăл Кулинене пăрахса айакка кайасшăн.

— Ан манăр мана, Виктăр Александрăвич!—тесе тилмĕрет хĕрĕ.

— Есĕ, Кулине, ухмах хĕрех мар... мужиклех те мар, темеле... Çапах та, есĕ вĕренменскер,—çавăнпа та, сана каланă чухне, санăн итлес пулат̆...

— Ĕлĕк есĕр, Виктăр Александрăвич, манпа апла калаçманччĕ...

— Ĕлĕк?.. Ĕлĕк?.. тенĕ лешĕ.

Шишкă та ĕлĕк апла калаçман тăр. Анчах халĕ вăл, „Шишкăна“ кĕнĕренпе, пĕтĕмпех Виктăр Александрăвич пек пулса тăчĕ.

— ... Есĕ вĕренменскер,—çавăнпа та, сана каланă чухне, санăн итлес пулат̆...

Çапла шурă тутăрлă, лутра, мĕскĕн чăваш хĕрарăмĕн халĕ итлес пулат̆.

— Ĕлĕк есĕ, Шишкă, апла калаçманччĕ!

— Ĕлĕк?... Ĕлĕк!.. тет те Шишкă, çинçе пилĕклĕ майрипе питĕрĕнсех илет.

Çав ĕç пулнă хыççăн, тепĕр куннех, епĕ Шишкă ĕçлекен учрежденийе карăм. Икĕ хутлă чул

çурт. Картишĕнчен кĕмеле. Вăрăм коридор. Пĕр хĕррипе вĕт шакăр служăшчисем, „совет" барăшнисем тăп тулли ларса тухнă. Çыраççĕ, машшинкисене çăтти-çат, çат çат çатлатараççĕ. Лере, чи шалти вĕçĕнче—Шишкă. Çăварĕнче пирус, сĕтели çинче пысăк, çутă сăран папки уçăлса выртаĭ. Шишкăна хирĕç, сĕтелĕн ку йенче, лешĕ çинçе пилĕклĕ майра и-хик, и-хик кулса лараĭ. Кĕлеткийĕ, пуканĕ çинче, кулнăçем сике - сике илет. Ĕçпе пынă хресченсем, хăйаймасăр, катара, алăк патĕнче, черет кĕтсе тăраççĕ. Шишкă вĕсене курмасĭ. Курсассăн та, курман пек лараĭ. Унăн, вĕсемсĕр те, калаçмали çынĕ пур. Вăл—питне сăрланă, шупка шарфне пуç çинчен усăнтарса йанă, çинçе пилĕклĕ майра.

— Васили Иванч!.. А? Васили Иванч!.. Епĕ ĕнерхи хут пирки сăмахласшăн.

Шишкă кĕçĕн служăшчине хайаррăн пăхса илчĕ. Хăй— вăйне çинçе майри умĕнче кăтартасшăн пулé—хыттăн вăрçса тăкрĕ ăна.

— Йа тебйа взгрейу за етă! Понимайешь?.. Взгрейу йа тебйа!

Чăвашла каласассăн—пĕçертетĕп епĕ сана, пĕçертетĕп тени пулаĭ ĕнтĕ вăл. Темшĕн пĕçертесшĕн пулнă вара, ăна пĕлеймерĕм. Служăшчи, чĕрĕп пек, хутланса ўкрĕ. Мĕнле калăнха Шишкăна хирĕç? Çук, ăна хирĕç каламали çук. Вăл вăйлă... Вăл тем тума та пултараĭ. Мĕскĕн служăшчи, пĕрре çиллĕн, тепре йăвашшăн пăхрĕ те, хăй выранне кайса ларчĕ. Вăл хайар Шишкăна парăнчĕ. Çинçе майра хĕпĕртерĕ. Шишкăна шурă алли виттĕр пăхса, йăпăшлăн кулса илчĕ.

Çынсем тахçантанпах кĕтеççĕ.

— Йулташ заведушчи! Пушантăр-и есир?

Шишкă вĕсене хирĕç хĕсĕк куçĕсене кăна çавăрса кăтартрĕ.

— Подождите!.. Подождите!.. терĕ.

Унтан, çинсе майрине тем каларĕ те, таçта каймa хăвăрттăн хатĕрленме пуçларĕ. Çутă сăран папкине хул айне хĕстерчĕ. Туйине тепĕр аллине тытрĕ.

— Идите к заместителю! Вон заместитель!—тесе таçтала тĕллесе кăтартрĕ те, шак-шак тутарса çинçе майрипе тухах карĕç.

Ĕçпе пынă çынсем куçĕсене чарса кăна йулчĕç.

— Вот Шишкă!.. Чăн-чăн Шишкă!..

Манăн пĕлес килчĕ.

— Ăçта карĕ-ши ку Шишкă? тетĕп.

Ухмахла, хамăн ĕç пур çинченех, чуптартăм кусем хыççăн. Çунатлă тарантас çине ларнă та, кĕнеке магазинĕ патнеле сиккипе пыраççĕ. Лаши лайăхскер. Хура, пысăк лаша. Çилхисем вăрăм: усăнса, силленсе пыраççĕ. Урамри халăх çак хĕсĕк куçлă, улпутла Шишкă çинçе майрапа йунашар ларса пыни çине, тем халччен курман йапала пек, тĕлĕнсе пăха-пăха йулаĭ. Магазин тĕлне çитсен, Шишкă çинçе майрине, çĕклесе антарнă пекех, аллинчен тытса антарчĕ. Ахăр, пĕрне пĕри хытă йуратаççĕ пулмала.

Епĕ те магазина çитрĕм. Шишкăпа çинçе пилĕклĕ майри кĕнекесем пăхаççĕ. Шишкă прикашчăкпа мăн сасăпа калаçаĭ.

— Что есть у вас?

— Пурте пур. Акă пăхăр.

— Это все я знаю... читал. Больше нет-ту?

— Урăх çук.

— В таком случае, и вам оставлю 1-ый том журнала... А мне дайте другие томы.

— Епĕр ушкăнĕпе сутатпăр.

— Ка-эк?.. Нельзя, значит!.. Почему нельзя?

— Епĕр уш... кă... нĕпе... комплектипе сутатпăр,—тет Шишкăран хăраса ўкнĕ прикашчăк.

Шишкă итлемест. Шишкă, прикашчăк каланине тăнласшăн та мар. Вăл хĕрсе кайсах кăшкăрма тытăнаĭ. Пĕрре çинçе пилĕклĕ майри çине пăхса илет, тепре прикашчăкпа йатлаçаĭ. Шишкă!.. Шишкă!.. Хăрушă вăл Шишкă!..

III.

Каласассăн—каламали тухсах пыраĭ. Сăмаха пурне те нихçан та каласа пĕтерейĕмĕн, Шишкă çинчен те пĕтĕмпех каласа пĕтермели çук. Уй-й, пурне те калаçтăк, нумай хут варлама тивет. Çавăнпа епĕ калав вĕçне кĕскентерех каласа пĕтеретĕп.

Шишкăран та вăйлăраххи пур иккен тĕнчере! Пурăнсан, пурăнсан, Шишкă умне çакăн пек хут пырса выртаĭ:

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

. . . . . за некоммунистические, бюрократические поступки, тов. Иванова, В. И.. исключить из рядов РКП(б). Предложить . . . . . . . . .

. . . . . снять его с заведывания . . . . . . .

. . . Отв. секретарь Партколлегии (алă пуснă).

Акă инкек! Кĕтмен-туман çĕртенех, Шишкăна пуçне устараĭ. Шишкă хуйха ўкет. Çинçе пилĕклĕ майри те кăмăлсăр. Йалан харкашма пăхаĭ. Хам курман та хуĭ,—йулташсем, пĕлекенсем, çапла каласа кăтартаççĕ. Пĕрре, çĕрле пулсассăн, çаксем лайăххăнах вăрçма тытăннă, тет. Çинçе майра, ĕлĕк йăпăлтатса-кулкаласа кăна çўрекенскер, Шишкă çине (халь Шишкă мар ĕнтĕ те, анчах епĕр çаплах калăпăр) лач! сурса лартрĕ, тет.

— Чăваш... Хĕсĕк куç... Невежă... Пурăнмастăп санпа урăх!—тесе каларĕ, тет.

Чăнах та, çавăн хыççăн, çинçе майра Шишкăна пăрахса кайнă. Шишкă халĕ пĕчченех, пĕр пĕчĕк выранта пурăнаĭ. Ăна епĕ, тепре, кĕркунне куртăм. Шупашкара килсессĕн, йаланах, Атăл хĕрĕнче çўрес килет. Атăл çийĕ такама та илĕртет. Утатăн, утатăн хĕррипе пĕтĕм чуну канса пыраĭ. Пăрахутсем, пĕчĕк кимсем, паршăсем, çўлте тата, пуç тăрринче, пĕлĕтсем йарăнса çўрени... çавсем пурте сана, тыткăна илнĕ пек, çавăрса илеççĕ... Шишкă пĕр тĕлте карлăк çине тайаннă та, тем шухăша кайса, Атăл çинеле пăхса тĕлĕрсе тăраĭ. Кивĕ пальтопа. Кивĕрех картузпа. Туйи çук. Тем-тем тĕслĕ галстукне те майĕнчен вĕçертсе пăрахнă. Çуллахи тумĕпе танаштарсан, хĕрхенес килчĕ ăна манăн.

— Хĕветĕр мар-и çак есĕ?

— Çав. Палларăн-и вара халĕ?

— Кăшт астуса илетĕп... паллатăп, тет.

Вăл мана хăй служби çинчен калама тапратрĕ. Калассине чăвашлах калаĭ халĕ. Партирен тĕрĕсмар кăларса йачĕç, тесе ўпкелешме пуларĕ. Анчах епĕ нумай итлесе тăмарăм. Мана Атăл вăйхăвачĕ çавăрса илчĕ. Епĕ, кĕрхи Атăлпа паллашас тесе, Атăл сăрчĕ хĕррипе тăвала утса карăм.

— Сыв пул, Шишкă!

**Хумма Çеменĕ.**




## Пĕр художник

— Мана ни политкружоксене çӳреместĕн, ни художниксен произведенисене тишкĕрсе пыракан журналсене вуламастăн, ни художĕствă ыйтувĕсем çинчен çыракан кĕнекесене туйанмастăн, теççĕ. Литературă илме укçа, вĕренме вăхăт пĕтерме!.. Е, çук. Мана хам тунă йăнăшсем тăрăх вĕренсе пынипе те çитĕ.

## Умлă-хыçлăн

Шупашкарта тротуарсене плансăр туни палăрать. Пĕр-пĕр учреждени тунă тротуара йе Водосвет, йе çыхăну техникĕсем çĕмĕрсе пăрахаççĕ.

Виç рабочи пĕр учреждени çурчĕ умĕнчи тротуара çĕнĕрен хываççĕ. Вĕсем патне тепĕр виçĕ рабочи лумсем йатса пырса тăраççĕ.

Тротуар саракан рабочисем ыйтаççĕ:

— Лумсем йатса мĕн тума килтĕр кунта?

Лумсем йатнисем калаççĕ:

— Хывăр! Хăвăртрах хывăр! Нумай ан кĕттерĕр. Пирĕн те ĕçлемеле.

--Мĕн ĕçлемеле?

— Есĕр тунă тротуара епĕр лумсемпе çĕмĕрме килнине сисместĕн-и мĕн? Есĕр тунă тротуар айĕн водопровод каймала.

## Бӳрократпа унăн йулташĕ

— Итле-ха, сан ăçта та пулсан вырăн шыракан паллані бухгалтĕр çук-и?

— Мĕн тума сана? Санăн вĕт укçа-тенкĕ ĕçне пĕр бухгалтĕрех тытса пыма пултарать.

— Мĕн тăвас тейĕн ĕнтĕ. Штат çавăн пек те... кама та пулин илсе штата тултарасах пулать.

## Йут патшалăхри савăтра

Рабочи (*хăй йулташне*): — Совет Сойузĕнчи рабочисем хăйсем хуçа. Унта пурăнма пит аван.

Савăт хуçи:—Епĕр çук çĕрте йаланах аван, теççĕ.

Рабочи:—Епĕ те çапла шухăшлатăп: есĕр çук çĕрте пит аван, тетĕп.

## Ликпункт умĕнче

— Ура! Ура!

— Мĕн ес, тăхлачă, савăнатăн? Ăсран кайрăн-и мĕн?

— Ман ма савăнас мар. Упăшка ликпунктран отличнă вĕренсе тухрĕ.

## Кулҍтурлă-кулҍтурсăр

— Пирĕн Çергей Иванов питĕ кулҍтурланса кайнă.

— Аçтан паллă кулҍтурланни?

— Арăмне вăрçнă чухне нимĕçле калаçа вăрçать, амăшпе-чăвашла, ытгисемпе вырăсла.

## Начар пйессăн автăрĕ

— Ман пйесса йышăнчĕç.

— Ăçта? Чăвашсен академилĕ театăрĕнче-и?

— Мар. Дежурнăй магазинта. Тавар чĕркеме.

## Хĕрлĕ Чутай почтинче

— Мĕн-ха кунта çынсем хаçатсем хуçлатаççĕ, типографи мар пулĕçке?

— Типографи мар, пуштă. Пуштăра канвертсем çуккипе çынсем хаçатсенченех канвертсем туса çырусем йараççĕ.

## Çитес çук

— Пирĕн колхозри бригадирсене нихăш колхозри бригадирсем те çитес çук.

— Ăçти бригадирсене?

— Трак районĕнчи Тăхăртакари „Хĕрлĕ çăлтăр" колхозрисене.

— Ма?

— Çынсен колхозĕнче ĕçленине шута илсе пырас ĕç темрен те аван пырать. Пирĕн пĕлтĕртен пуçласа пайанхи куна çитсе те ĕçкунĕсене ĕçкĕнекисем çине лартса паман.

## Ĕçлеме пултарайман

— Епĕ ĕçе йурăхсăр çын шутне кĕтĕм. Мана пособи паратăр-и?

— Есĕ ĕçлеме ăçтан йурăхсăр пулатăн: çамрăк, инвалид тавраш мар, вăкăр пек сывă...

— Мĕн калаçатăр! Ĕненмесен хам ĕçленĕ вырăнтан панă удостоверени çине пăхăр. Унта мана вырăнтан ĕçе йурăхсăр пирки кăларса йанă, тесе çырнă.

## „Капкăн" канцелҍарине пынă çын калани

— Есĕр апла Пухтел районĕнчи çĕнĕ Улкаш йалĕ пулатăр?

— Тĕрĕс.

— Сирĕн йалсовет председателĕпе çекретарĕ мĕнле хушаматлă çынсем?

— Председателĕ — Кумтынăв хушаматлă, çекретарĕ Илмендейĕв.

— Аван çынсем-и вĕсем?

— Вĕсем-и? Вĕсем çынсем мар, вылҍăхсем пулĕ тетĕп.

— Мĕншĕн?

— Ĕнеле ĕçеççĕ.

## Çĕрпӳ районĕнчи „Шумашар" колхозра

— Анне, вылҍама кайам-и?

— Кайасси кайахта, вăйăран вăкăр пулать, теççĕ.

— Апла пулсан каймастăп та, вăкăр пулсан хĕлле те, хамăрăн колхозри 24 ĕне пек тултах пурăнас пулать.

## Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Турханта

Учителҍ:—Сан ывăлу пит начар вĕренет. Шкулта нимĕн те тăвашсăн мар.

Ача-амăшĕ:—Ашшĕ ратнисене хывнă пуҍ. Ашшĕ ратнисем пĕри колхозри ревизи комиççинче, тепри хамăр колхозри „Осоавиахим" организацинче. Ĕçлеме йуратмаççĕ. Нимĕн те тăвашсăн мар.

# Тултан лайăх, шалтан йапăх

Хăш-хăш вулав çурчĕсене кӗрсен тухса тарас килет: колхоз витинчен те йапăхрах тытаççĕ вĕсене.

*Филиппав ўкерчĕкĕ.*



— Ах, ку лашана! Вулав çуртне курсассăнах кайала туртăнма пуçларĕ. Пурăнма унта кĕртсе хăварасран хăраť пулмала.

# Мĕн-мĕн çук-ши?

Ех, мĕн тĕрлĕ вăйă çук çав ачасен! Вĕсен ăсĕ темле вăйă та туртса кăларĕ. Выљља та выљља: лашала, ťыхала, паттăрла, вăрçăла... темле те. Вăйă вĕрентекен çук пулсан та, пит куљанса лармаççĕ. Анчах... çав „анчах“ тенĕ сăмаха кам шутласа кăларнă-ши? „Анчах“ хыçĕнче тем те пытанса тăраť. „Пирĕн шкул пур йенчен те аван ĕçлет, анчах“... Темле çав, тепĕр чух çав „анчах“ та пысăк пулаť иккен. Çапла акă кунта та.

— Петĕр, мĕншĕн ман сумкăна таракан тултарса лартрăн? Есĕ шкула таракан тултарса лартма килнĕ-им? Мана таракан тултарса çўреме сумкă çĕлесе панă-и?

— Мана ĕнер анне шкултан пырсан анкартишне кайса силленмесĕр пўрте кĕртмерĕ. „Кашни кун таракан шкултан йертсе килетĕн, пўрт çывăх не йарас çук сана“, тет.

— Мана та атте... Айтăр пĕтерсе тăкар! Долой таракан! Пире аннесене йатлаттараť.

Вырăс Сурăм (Елĕк р.) тулли мар вăтам шкулĕнче вĕренекенсен учителсем пыриччен таракансемпе „вăрçă“ пуçланчĕ. Оруди вырăнне вĕсен кĕнеке. Вĕсемпе çтена çинче, кăмака хыçĕнче „тўрĕ наводкăпа“ тĕллесе таракансене шатлаттараççĕ. Пулеметсем вырăнне теграťсем çаталтатаççĕ. Танк та çук вĕсен. Танк вырăнне ура лапписем, çўлтен ўкекен таракансене пĕр батаљйон ура лаппи таптаса пыраť. Хăш-пĕрисем штыксемпе атакăна

тăрăнчĕç: перосем пĕрин хыççăн тепри таракансене тирĕнсе лараççĕ. Гранатă вĕсен—панулми варри. Панулми варри çтена çумне пырса çапăннă çемĕн отделени отделенипе тăкăнаççĕ.

— Атакă! Пер!—Анчах вĕреме пуçланă сĕлĕ пăтти пек пăтранаť клас. Анчах тăшман кайала чакса окопсене тулчĕ. Окопĕсем хатĕр, вĕç хĕррисĕр нумай.

— Стой! Мĕнле çапăçу ку?—кĕрсе кайрĕ вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ Шумилăв.

— Нестăр Кĕркорчă, килте таракан йертсе килетĕн тесе вăрçаççĕ. Пĕтерес терĕмĕр те...

— Сирĕн ĕç мар ку. Таракан вăл урнă йытă мар унтан хăрама. Апат памасан хăйсемех пĕтĕç.

Шкул çтенисем хĕрлĕ, выљљанса тăракан чечекпе илемлетнĕ пек йалтăртатаççĕ. Мача çинчен таракансем ĕнсе хыçне тĕллесе ачасем çине пĕрин хыççăн тепри сикеççĕ те çухави айне пыганса йĕкĕлтесе тăраççĕ. Звонок пулса пĕтеймерĕ, вĕренекенсем пĕр-пĕринчен ăмăртса витре кутне пырса куклене-куклене лараççĕ. Епĕ физкуљ урăпа хăтланаççĕ тесе. Çук, витререн шыв ĕçеççĕ иккен, крушкă çук. Ара, мĕн тăвас крушкăпа? Шыв вăл çăра-ерех тавраšĕ мар крушкăпа ĕçме. Ăна валљи лайăх шутласан витре те кирлĕ мар. Çăла тӳрех пусма хумала та, ана-ана ĕçмеле ĕçесех текенсен. Кăна директăр Храбров шутласа илеймен-ха.

Ну, мĕн вара ăна шутласа илейменшĕн. Ун вырăнне урăххине пит те ăслă шутласа кăларнă. Классене пĕр-пĕринчен чус татăкĕсемпе висшер пӳрне сарлакăш хушăк хăварса уйăрнă. Пит те ăслă вара ку. Ку шăтăксем витĕр вĕренӳ пайпуçлăхĕ сасартăках висĕ класра вĕрентнине тĕрĕслеме пултараť. Тепĕр йенчен вĕренекенсем те пĕр вăхăтрах висĕ учителе итлеме пултараççĕ: арифметикă, биологи, географи пĕр вăхăтрах вĕренме пулаť. Анчах апла тума çынăн хăлха сахалтарах: пĕри арифметикă, тепри биологи итлесен, географи итлеме урăх хăлха та йулмасť.

Кăна та чипер шутласан йĕркелеме пулаť иккен, ĕç те нумай кирлĕ мар. Мĕн пурĕ те çирĕп расписани кăна тăвас çук. Ну, ăна вĕсем йаланах тумаççĕ те. Акă çенťабĕрĕн 17-мĕшĕнче вĕрентекенсемпе вĕренекенсем пухăнчĕç—расписани çук. Нумай шутласа тăмали çук—йарăр киввипе. План çинчен каламăпăр та, вĕренӳ планĕ, вĕренӳ конспекчĕ нихăшин те çук.

Мĕн вĕсене план? Пĕлтĕр Сатлайкинăра тăваттăмĕш клас ахалех, суйапах чапа тухрĕ, вĕрентекенĕ преми илчĕ.

Халь мĕнле? Халь вĕренекенсем ним те пĕлменни паллă пулчĕ. Вĕсем висçĕмĕш клас программине те тĕплĕн пĕлмеççĕ. Райçутпайне те нимех те мар. Вăл сана тӳрех йака та тирпейлĕ тетраťсем кăларса кăтартаť. Мĕнле тунă-ши вăл тетраťсене? Мĕншĕн суйана пытармала-ши?

Ытти ĕçсем те çавах. Вĕренӳ планĕнчен пуçласа, заңати вăхăтра пуçламанни патне çитиччĕнех.

Ех, мĕн-мĕн çук-ши ку шкулта? Тетраťсем çук, кĕнекесем çук, ручкă, крушкă т. ыт. çук. Тĕрĕссипе каласан чăн-чăн директăрпа вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ те „çук". Районра çутĕç пайĕ пур, анчах (каллех анчах).. вăл курмасť.

Н. Чурпай.



— Иван Дормидонăвич! Ăçталла есĕ!
— Епĕ-и? Епĕ хуларан йала. Укçа растратă турăм. А есĕ?
— Епĕ-и? Йалтан хулана. Укçа растратă турăм.

*В. Филиппăв ӳкерчĕкĕ.*

# Телейсӗр ача

(*7—8 уйӑх кайарах пулса иртнӗ*)

— Снахвун Снахвунч, ҫак ачасене сӑнаса пӑхха,—тенӗ педтехникум директӑрӗ, пӗр ҫичӗ сакӑр уйӑх кайарах, канцеляри алӑкӗ умне пухӑннӑ ачасем ҫине кӑтартса.

Снахвун Снахвунч ӗнсе хыҫӗнчен вӗри шыв сапнӑ пек сиксе тӑма хӑтланчӗ, тӑраймарӗ: пичке йевӗрлӗ хырӑмӗ сӗтелпе пукан хушшине хӗсӗнсе ларни канҫӗрлерӗ. Унтан темӗнле мӗшӗлтеткелесе тӑчӗ те алӑк патнеле утрӗ.

— Есӗ пуҫӗсен пысӑкӗшне лайӑхрах виҫ, пире ӑслӑраххисем кирлӗ,—ҫухӑрса йулчӗ Снахвунӑн суха калакӗ йевӗрлӗ ҫурӑмӗ ҫине пӑхса пӗр вӗрентекенӗ.

Тепӗр икӗ-виҫӗ минутран Снахвун пӗр васкамасӑр, ӗнер ҫеҫ тӗнчене ҫуралма ӗлкӗрнӗ пӑру пек уткаласа, хӑйӗн кабинетне ҫитсе кӗчӗ. Икерчӗ ывси пек куҫлӑхне сӑмси ҫине углантарса лартрӗ те:

— Микулайӗв, кил-ха кунта,—терӗ пӗр ачана пӳрнипе тӗллесе.

Вунпиллӗк ҫулхи ҫамрӑк ача ӑслӑ куҫӗсемпе йӑвашшӑн пӑхса педолӑг умне пырса тӑчӗ. Пӗр самантра педолӑг аллинчи лентӑ ача пуҫӗ йӗритавра йаваланчӗ. Вӑл, кивелсе шӑтнӑ вӗркӗҫӗ пек мӑшлатса, ачан ҫурӑмне, пӳрне сыппине, асав шӑлне, хӑлха сарлакӑшне, ӗнсе чиккине, ҫамка ҫӳлӗшне виҫме пуҫларӗ. Йулашкинчен ура тупанне виҫсе пӑхасшӑнчӗ те ӳркенчӗ, виҫмерӗ.—Кирлӗ мар,—тесе аллине сулчӗ.

Ачан ҫан-ҫурӑмне сехет ҫурӑ виҫнӗ хыҫҫӑн, ачан куҫӗ умне темӗнле кукӑр-макӑр йӗрлӗ чӗркеленӗ хутсем, саспаллисене пӑтраштарса ҫырнӑ таблицӑсем тухса ҫакӑнчӗҫ.

— Пӗр самантра ҫак таблицӑри „А" саспаллисене чӗрсе тух!—терӗ ачана Снахвун Снахвунчӑ.

Ача йӗп-йӗпе шыва ӳкиччен, чӗлхине шӑлӗ айне ҫавӑрса ҫыртса, „А" саспаллине чӗрме пуҫларӗ.

— Ахӑ,—терӗ ача ҫине пӑхса педолӑг,—ку ачан зрителни памӗт вайлӑ, вӑл талантлӑ художник пулмала...

Вунпиллӗкри ача хӑйӗн ӗҫне пӗтерсен, пӑрҫа пек тар тумламӗсене ҫамки ҫинчен шӑлса илчӗ.

— Аҫу,—терӗ педолӑг кӑшт чӗнмесӗр ларнӑ хыҫҫӑн,—1905 ҫулхи революцичче патша влаҫне хирӗҫ кӗрешме шутлаччӗ-и?

— Атте,—терӗ те ача, чӗлхи ҫыхланса ларчӗ,—ара, епӗ 1921-мӗш ҫулта ҫуралнӑ та, хам ҫураличчен вунпилӗк ҫул авал пулнине епӗ ӑҫтан пӗлем,—тесе шутласа илчӗ. Урӑх нимӗн те чӗнмерӗ вӑл, пӗрре вӗриленсе, тепӗре ҫӳҫенсе чӗтресе илчӗ.

Снахвун Снахвунч та хӑйне хӑй ҫапла шутласа илчӗ:—Ун чух вӑл ҫуралман пулсан та ашшӗ-амӑшӗн шухӑшӗ унӑн пуҫ мимине ҫуралас умӗн куҫнах ӗнтӗ.

Ыйту хыҫҫӑн ыйту пама пуҫларӗ педолӑг.

— Мӗншӗн ҫынсем совета йуратаҫҫӗ?

— Совет пире кирлӗ-и?

— Пӗр ҫын урампа пынӑ чух автомобил айне пулнӑ та хӑйне хӑй пӑвса вӗлергӗм тесе шутлат. Ҫав тӗрӗс-и?

— Мӗншӗн хӗвел хӗвеланаҫӗнчен тухмаст?

Ҫитмӗл ҫиччӗмӗш ыйтуне ответ парас умӗн ача хӗрелсе кайрӗ те, тӳсеймесӗр йӗрсе йачӗ,

— Пуҫ ыратат, ывӑнтӑм,—терӗ вӑл ӗсӗклесе.

Педолӑг куҫхарши айӗн ҫиленсе пӑхрӗ, хура куҫӗ пӗрре ҫӗлен ҫине пӑхнӑ пек чарӑлса карӗ, тепре—хӗсӗнсе хушӑк витӗр хӗвел ҫути ӳкнӗ пек ҫеҫ йӑлтӑртатма пуҫларӗ.

— „Тестсене" пӗтермен,—терӗ вӑл йулашкинчен,—експеримент тумасӑрах сана хак пама пӗлейместӗп.

Ача тата нумай ыйтӑва ответлерӗ.

Унтан темӗнле приборсем, кӑлтӑрмачӑсем илсе, Снахвун Снахвунчӑ ачан чӗрнисене, кӑкӑрне, айӑк пӗрчи шӑммин тӑрӑшне виҫсе пӑхма пуҫларӗ.

Сехет йӗппи шӑват—9 сехетрен икӗ сехет ҫинех ҫитрӗ. Снахвун Снахвунчӑ сехет йӗппи ҫине куҫлӑхӗ витӗр пӑхрӗ те, вӑрӑмӑн сывласа йачӗ.

— Санӑн,—терӗ тухса кайас умӗн,—пуҫкӑшӑлу 800 сантиметр: арифметикӑпа алгебрӑна „отличнӑ" вӗренме пултармала, географипе химине „очень плохо"-ран мала вӗренме пултараймастӑн, мӗншӗн тесен пуҫкӑшӑлун виҫи 2 сантиметр кайарах...

Вунпиллӗк ҫулхи ача педолӑга каласа пӗтерме памарӗ:

— Епӗ географипе йаланах аван вӗреннӗ те, есӗр ахаль суйатӑр!—терӗ.

— Пулин,—терӗ педолӑг,—„тест" тӑрӑх ҫапла тухат пулсан мана мӗн...

И. Кашлинке.

## Ашшӗпе ачи

Кӑшаркасси йалсоветӗн отчотлӑ пухӑвне Сӗлескер йалӗнче (Ҫӗрпӳ районӗ) иртернӗ чухне суйлавҫӑсем пухӑва сахал пычӗҫ. (Сак-Сак).

*Филиппӑвӳкернӗ.*



— Атте, атте, тетӗп! Епӗ пайан пухура пултӑм. Пухури халӑха пӗтӗмпех шутласа тухрӑм...

— Суйатӑн пуль?.. Тӑхта-ха!.. Есӗ шутлама пӗлместӗн мар-чи?

— Мӗнле „пӗлместӗп". 10 таран шутлама пултаратӑп.

# Шиклӗ етем




— Хӑнана ма ес ман ҫытар ҫине выртарнӑ! Епӗ вӑл ҫытар ҫинче выртнӑ чухне мӗн-мӗн ҫинчен шухӑшламан пулӗ. Политик йенчен йӑнӑш шухӑшсем те сахал мар пулнӑ... Хӑна, ман ҫытар ҫинче выртнӑ чухнехи шухӑшсене пӗлсен, темӗн те курса ларӑпӑр.

*Айзман Микули.*

# „ÇЎПÇИПЕ ХУПĂЉЧИ“

## Пĕр пайлă комеди

**Чăваш Репертком сценă çинче лартма ирĕк панă.**

### ВЫЉАКАНСЕМ:

1. **Кăçат Хĕветĕрĕ**—каччă, Арманкасси колхозникĕ.
2. **Алтати**—хĕр, Вăрманкассем, колхозницă.
3. **Верук—Хветĕр** амăшĕ.
4. **Кулине**—Алтати инкĕшĕ.

Суд пуçланиччен кĕтсе лармали вырăн (*Хветĕрпе Верук кĕреççĕ*).

**Хветĕр**—Анне, есĕ çакăнта кĕтсе лар-ха, епĕ Ваçлей куккасем патне кайса лаша тăратам.

**Верук**—Кай та, час кил. Суд пуçланиччен лешсемпе калаçса пăхас, тен май кўрĕпĕр-и?

**Хветĕр**—Йурать, анне, епĕ халех! (*Кайат*).

**Верук**—Васканипе пайан апат та ларса çиме пулмарĕ. Никам та çук чухне кăшт çырткалам-ха. (*Аса илсе*). Ей, чунилтĕр, ара, апачĕ трантас çинчех йулнă. Хветĕрĕ лашине çавăрса та карĕ пуљ. (*Васкаса тухат*).

**Кулине** (*кĕрет*)—Çакăнтах терĕç те, пĕркун çакăнта килсе кайнăччĕ те. Лара-тăра пĕлмен хĕрупраçшăн сулланса çўрес пулать. Алтатийĕ те мана, хăйĕн инкĕшне, свидетĕле çыртарнă. Епĕ вĕсене пăхса тăнă-им. Намăса пĕлмен ача-пăчашăн тем те курса ларас пулĕ.

**Алтати** (*кĕрет*)—Килте мăркани те çитĕ-çке ĕнтĕ. Мĕскерле вăл чĕлхе-çăвара кăштах чармала мар.

**Кулине**—Чĕлхене калаçма тунă пуљ.

**Алтати**—Йĕркелĕрех пулас пулать. Есĕ судра та тем те лăпăртатăн.

**Кулине**—Судра калаçмасан ăçта калаçмала тата. Чупкăн! Епĕр те йаш пулнă, сирĕн пек пĕре те çўремен.

**Алтати**—Саппа сăмах вĕçне нихăçан та çитес çук. (*Кайат*).

**Кулине**—Чупкăн! Хĕр пуçăн ача тăвать те, тата вăлах правă. Епех усал иккен. Кăшт чĕнмели те çук, часах тутасем çĕре перĕниччен тăсăлаççĕ.

**Верук** (*кĕрет*)—Пирĕнтен иртерех килнисем те пур иккен.

**Кулине**—Пур-ха. Иртсе лар. Инçетрисем-и?

**Верук**—Айакрийех мар.

**Кулине**—Тем ĕçпе килмеле пулнă тата?

**Верук**—Хаљ те çул тăрăшшипех йатлаçса килтĕм. Ĕççĕр аптранă пек „слон сутса“ çўреттереççĕ. Виç ерне кайăрах пĕрре килсе кайрăмăр, свидетĕлсем çук, терĕç. Суда пайана хăварчĕç. У-ух, хĕрĕн амăшне пĕрре тытса силлесчĕ. Хĕрне чараймасть. Çакăн пек тарăхнă вăхăтра куç умĕче пуласчĕ. Питĕнчен сурнă пулăттăм.

**Кулине**—Еп хам та çапла шухăшлатăп. Ман хĕрсеме намăс тăвакан амăшне курасчĕ, тетĕп, епĕ те питĕнчен сурнă пулăттăм, тетĕп.

**Верук**—Пĕр кунне пĕр ĕçкунĕ иртрĕ. Пайан тепĕр ĕçкунĕ иртет.

**Кулине**—Çапла пулмасăр, тăхлачă. Ак, пайан та, ирех, купăста кутне хускатма пырса каларĕç, çук, каймала мар, кунта килес пулать.

**Верук**—Сирĕн купăстасем самай ўсрĕç пуљ ĕнтĕ?

**Кулине**—Ўсеççĕ самайах. Пирĕн шыв хĕрине лартрĕç те кăçал. Шăварма та çывăх, купăсти те таса.

**Верук**—Çапла пулмасăр. (*Пауза*). К-хм!..

**Кулине**—Есĕр ĕçкунĕсем чылай турăр пуљ кăçал?

**Верук**—Темиçе пулнă-çке. Ывăлпа 256 ĕçкунĕ пулнă тери çав бригадир. Епĕр ывăлпа çеç пурăнатпăр та...

**Кулине**—Епĕр те хĕрсемпе çеç пурăнатпăр çав.

**Верук**—Есĕр самай турăр-и?

**Кулине**—Çăва тухнăранпа ĕççĕр ларманччĕ теха, çаплах. Хĕрсем ман, темскер чире карĕ те... Хаљ çине пĕчченех ĕçлекелерĕм-ха.

**Верук**—Тем тĕлне пулнă ĕнтĕ сан хĕрсем?

**Кулине**—Кăçалхи ача-пăча тем тĕлне те пулĕ. Сыхланма пĕлмесĕрех хăйне валли тупрĕ-ха ĕнтĕ.

**Верук**—Те ĕçленĕ çĕрте çав шыв ĕçнĕ-ха ĕнтĕ?

**Кулине**—Чĕр шыв ĕçсе хырăмĕ карăнчĕ пулмала çав.

**Верук**—Апла пулсан, воћанкă чирĕ пулĕ. Пуљницана кайса пăхрăр-и?

**Кулине**—Кайман.

**Верук**—Ма илсе каймарăр ара? Пўвĕ çитнĕ хĕрех пулсан, шелçке-ха.

**Кулине**—Шел те, мĕн тăвас тен. Кăçалхи çул пирĕн анчах мар. Нумайĕшĕ ун пек чирпе чирлекенни. Районти тухтăрпа калаçса пăхрăм та, чирне тўрлетме йурамасть, тет.

**Верук**—Тўрлетме йураман чирсем ,те пур-им вара?

**Кулине**—Пур иккен. Вăхăчĕ çитсен хăйех тўрленет, терĕ те...

**Верук**—Районри тухтăр, леш Моççи Исайчă пуљ?

**Кулине**—Çавă ара.

**Верук**—Ун патне ман ывăл ачи те кайса пăхрĕ те...

**Кулине**—Мĕн ĕçпе-ши?

**Верук**—Сана никам та çук чухне каласа парамха. Ман ачи пĕр хĕре йăвăр çын тунăччĕ те... Çав хырăма пăрахма май çук-ши тесе, калаçса пăхрăм, тет те, йурамасть тесе калавă, тет. Хаљ урăх саккун тухнă, тет, те-ха... Пăрахмала мар, тет, вара.

**Кулине**—Епĕ те сана никам та çук чухне каласа парам-ха. Ман хĕрсем те ача туса пачĕ çав.

**Верук**—Нумай пулать-и тата?

**Кулине**—Нумай пулмасть. Вăт хаљ, какой-нибуть пĕр уйăх иртрĕ-и, иртмерĕ-и.

**Верук**—Кампа тунă-ши тата?

**Кулине**—Еп хам курман та пĕлместĕп. Хăй, çăварне шыв хыпнă пекех, пĕр çăвар та шарламасть. Ах, мĕн чухлĕ хытармарăм пуль, мĕн чухлĕ хытармарăм пуль! Ача-пăчана кĕпе аркинчен тытса çÿрес тетни-им? Кампа тунă тенĕрен, пайан судра курăпăр.

**Верук**—Апла пирĕн иксĕмĕрĕн те пĕр хуйхă. Епĕ те хĕрне хам куçпа курман та-ха. Пайан судра куратăп пулинех. Манерлĕ хĕр пулсан ачине авлантарсан та пырĕччĕ. Çын сăмахĕ тăрăх хĕрĕ ним латти те çук, теççĕ.

**Кулине**—Епĕ хам та хĕрсеме качча парассишĕн хирĕçместĕп те... Анчах, ес калашле, каччи ним латти те çук, теççĕ. Пĕтрĕмĕрех ĕнтĕ, пĕтĕм йал-йыш умĕнче намăс курас пулать.

**Верук**—Ытла кульансах ан ÿк-ха. Е-ей, сахал-и ку чухне хĕрсем ача туни. Пирĕн йалтах акă речĕпех шутласа кайма пулать. Петĕр Миньокĕ çуратни çур çул та çитмен-ха. Микита Лисокĕ халь пĕр ик кун тенĕ чух туса пачĕ. Кавĕрле Матрунĕ çуратни çулталăк çитет ĕнтĕ. У-у, шучĕ те çук! Кăçалхи çул йалана карĕ ĕнтĕ вăл.

**Кулине**—Ара, ес калани... Пирĕн йалта Микуç Натили çуратрĕ те, 25 тенкĕ шыраса илмеле туса пачĕç. Матви Марйи тата... Унăн, уйăхнех çĕр тенкĕ ытла тухать тери.

**Верук**—Е-ей, темĕн те пулĕ ку чухне!

**Кулине**—Ман хĕрсеме темĕн чухлĕ шыраса параççĕ ĕнтĕ. Каччи укçа çинче пурнаканни пулсан, ытларах пулать пуль, укçа çинче пурăнманни пулсан, ĕçкунĕнчен шутласа парĕç. Мĕн пурĕпе çитĕ. Пĕр ачана темле те пăхса ÿстерĕпĕр. Ех, тăхлачă, сан ачине курасчĕ, хам ĕмĕрте те ун пек таса ача курман! Пулă пекех çатăлтатать. Çуралсанах 10 кĕрепенке тайрĕ тери çав.

**Верук**—Ман ывăл пекех пулнă апла пулсан. Ман ывăл пĕчĕккĕ чух çавăн пек таса ачаччĕ. Ман ывăлĕ халь те питĕ маттур та-ха. Лаптак кашта пек йаштак ман ывăл. Ес курман пуль-ха.

**Кулине**—Ăçта пурне те курса çитерĕн, харпăрхăй ачи харпăрхăйшĕн кирек камăн та аван пуль. Курак та вăн „хура пулсан та хамăннах" тесе калать тет. *(Паузă)*. Сан ачи кам хĕрĕпе çыхланнă тата?

**Верук**—Çак иртнĕ çура, кĕре хирĕç, ту йенеле кăçат йăвалама тесе кайнăччĕ те... Çавăнта темле путсĕр хĕр çумне çыпăçнă та, хĕре йăвăр çын тунă, хĕрĕ ача туса панă, тет. Халь акă суда чĕнтерчĕç. Хĕрне курасчĕ-ха, курсанах пĕтĕм питне тăмаласа тăкатăп. Ахăрса çÿреççĕ-çÿреççĕ те, вĕсем ахăрнишĕн типшар курса ларас пулать.

**Кулине**—Сан ачу ту йенеле кăçат йăвалама кайнă темерĕн-и? Мĕн йатлă вара сан ачу?

**Верук**—Ачи ман Хветĕр йатлă та-ха.

**Кулине**—Хветĕр?! Хăш йалсем вара ес?

**Верук**—Йалне Арманкасси теççĕ.

**Кулине**—Арманкасси?! Арманкассинчи Кăçат Хĕветĕрĕ апла?

**Верук**—Ийиа! Кăçат Хветĕрĕ тесе чĕнеççĕ çав.

**Кулине** (*сасартăк çиленсе*)—Апла пулсан сан Хветĕрÿ-и-ха ман хĕрсеме ача тутараканни?

**Верук** (*тĕлĕнсе*).—Ес хăш йалсем вара?

**Кулине**—Вăрманкасси.

**Верук**—Хĕрĕ мĕн йатлă?

**Кулине**—Алтати.

**Верук**—Алтати?! Ха-а!... Еси-ха вăл хăвăн хĕр пултăрна чараймастăн?

**Кулине**—Еси-ха вăл хăвăн ывăлуна чараймастăн?

**Верук**—Ман ывăл пĕре те ун пек çын мар. Мĕн пĕчĕкренпех тÿлек ÿснĕ. Такамран ыйтсан та, ман ывăла ун пек-кун пек тесе калас çук. Нихçан та хĕрсем хыççăн чупман.

**Кулине**—Халь çеç ху каларăн мар-и?

**Верук**—Каларăм пулсан та, пулман. Ашшĕсĕр ÿснĕскер питĕ тÿлек ача.

**Кулине**—Мĕн тата тунас тетни-им? Хĕрсеме намăс туса йат сартăр та, халь тата тунас тетри. Ах, шуйтан!..

**Верук**—Ман ывăл мар шуйтан, сан хĕр пултăру шуйтан!

**Кулине** — Есĕ мĕн кунта ывăлу хутне кĕрсе çÿретĕн?

**Верук** — Есĕ тата мĕн хĕр пултăру хутне кĕрсе çÿретĕн? Ес ман ывăлпа иккĕшне çÿренине куртăни, калаçнине куртăн-и!..

**Кулине** — Ни çÿренине курман, ни калаçнине курман!

**Верук** — Еппин сиксе лармали те çук.

**Кулине** — Сан ывăл пек шĕшлĕсем, малтан кирек хăçан та качча илеççĕ. Кайран, хырăм ÿсе пуçласанах, кайала çавăрăнса пăхмасăрах тараççĕ.

**Верук**—Ан павраса лар! Курман, илтмен нимĕн те çук, тап-таса. Пирĕн çумра нимĕн шыраса илмели те çук.

**Кулине**—Ывăлу кăçат йăвалать темерĕн-и?

**Верук**—Сирĕн хырăмшăн йăваламан.

**Кулине**—Апла пулсан ĕçкунĕнчен шыраса парĕç.

**Верук**—Вăл кăçал пĕр ĕçкунĕ те туман. Кĕркуннех килтен тухса кайнă та, таçта çапкаланса çÿрет.

**Кулине**—Çĕнĕ саккун тăрăх 2 çула тĕрмене ларасси çеç йулать еппин.

**Верук**—Тĕрмене?! Хĕре ача тутарнăшăн хăш ĕмĕрте тĕрмене лартни пур?

**Кулине**—Нихăш ĕмĕрте те лартман пуль те, халь лартаççĕ.

**Верук**—Пăх халь, йепле саккун йĕркисене пĕлекенни тупăннă. Çав тери саккун йĕркисене пĕлетĕн пулсан, мĕн шырама килтĕн ес кунта? Сан хăвăннах судйе пулмала. Ача тăвакансене килна пухмала та, тек судить туса лармала. Хĕрне курсан мĕн пулĕ тесе шухăшланăччĕ, ывăла авлантараси мĕн тенĕччĕ. Халь ĕнтĕ хĕрне курмасăрах паллă. Хĕрĕ те сан пекех кутăн пулмала. Улми йăвăççинчен айакка ÿкмест, теççĕ. Çук, çук, çук, тем парсан та кирлĕ мар. Хам çÿлли укçа купаласа парсан та, еп санпа хурăнташлă пулас çук. Çĕр çухрăм айакка кайса илем те, еп сан хĕрна илес çук. Тфу, тфу!..

**Кулине**—Еп сана çакăн пеккине курах хĕр парса ларатăп тетĕн-и? Ĕлĕк пирĕн аттесен ула автан пурччĕ. Есĕ пĕре те çавăнтан уйрăм мар иккен. Ах, ула автан. Çакăн пек кăмăла хуçнăшăн сана суда парас пулать.

**Верук**—Суд? Ес суккăр çынсене суда кайса пар, мана мар. Епĕ халь, мухтав турра: куçлă-пуçлă, сăмсалă-туталлă, чĕлхе-çăварлă, алăлă-уралă, суда парсан та, санăн айнах пулас çук. Хам ĕмĕрте пайтах судлашса курнă, никам айне те пулман. Халиччен ниçта та намăс курман. Тфу! Тфу!.. Çине-çине тфу!.. (*тухса кайат*).

**Кулине**—Чăн ухмахах пуль ку хĕрарăм. Чăнахах Кăçат Хветĕрĕн амăшĕ пулсан, кунтан ырри-

нех кĕтме çук. Кун пек шăртне ниçта та вырнаç-тарма пĕлменскер, пырса тивертсе те йарĕ.

**Хветĕр** (*кĕрет*)—Кунта та никамах та çук иккен. Судйисем килмерĕç-и-ха?

**Кулине**—Çук ха.

**Хветĕр**—Килни иртерех пулчĕ пулас.

**Кулине**—Есĕ мĕн, заçедатĕл мар пуђ те?

**Хветĕр**—Мар.. ах да, заçедатĕл çав.

**Кулине**—Пăхсах паллă, судлашма килекенскер мар пек туйăнаť.

**Хветĕр**—Да.. çапла çав!

**Кулине**—Ак есĕ ĕнтĕ суд ĕçĕсене аван пĕлетĕн пулмала. Тўррипех кала-ха: манăн хĕрсем ача тунă та, çавна шыраса илес тесе суда панăччĕ, çак çĕнĕ саккун йĕркипе мĕн чухлĕ шыраса илмеле тенĕ-ши? Пĕри пĕр кун халăх çинче вуласа кăтартрĕ те тĕплĕнех ăнланса йулаймарăм пулас.

**Хветĕр**—Халђ ăна ăçтан чăннипе калама пултарăн-ха? Суд тунă чухне курăнаť. Унта курнаť. Халђ нумай пулмасť пĕрине суд турĕç те, пĕр пус та тўлемеле пулмарĕ. Хĕрĕ ачине пăхса ўстерме пултарайманнине кăтартса пачĕç те, хĕртен ачине тытса илсе, ашшĕне памала турĕç.

**Кулине**—Ак тата. Апла та пулаť иккен.

**Хветĕр**—Тĕрлĕрен пулаť.

**Кулине**—Ах, ывăлăм, есĕ ман хĕрачашăн тăрсан, еп сана ахалех тумăттăм. Есĕ мĕнле пулсан та судйесем çумĕнчи çын. Сирĕн сăмаха кĕрĕшме те пултараççĕ.

**Хветĕр**—Кăçал апла суд тумаççĕ, тăхлач! Кăçал саккун мĕнле хушаť, çапла тăваççĕ.

**Кулине**—Çапла пуђ çав. Епĕ, кăçал та илкелеççĕ пуђ терĕм те...

**Хветĕр**—Çук, калаçмали те çук.

**Кулине**—Вăт ес, ача, ăслă калаçатăн. Ман хĕрсемĕн ачи, сан пек ăс-тăнлă çынпа пулнă пулсан, пĕр сăмахсăрах кучча памала. Халђ акă каччин амăшĕпе калаçрăм та, амăшĕ çавра çил пекех. Ывăлĕ те амăшне хывнă пулсан, шухăшламали те çук.

**Хветĕр**—Кам пĕлет ăна? Çынсем тĕрлĕрен пулаççĕ. Пĕр çемйерех пĕр пек мар. Акă пайан 13 алимент сучĕ пулмала, теççĕ. Унта тем тĕрлĕ çын та пулĕ. Тўррипе каласан: епĕ хам та çав ĕçпех килнĕ те-ха... Хĕрĕпе, тата хĕрĕн амăшпе курса калаçас та, килĕштереççĕ пулсан суд туса аппаланиччен, илес те кайас, тенĕччĕ.

**Кулине**—Мирлĕ тунине мĕн çиттĕр ĕнтĕ.

**Хветĕр**—Ех, тăхлачă! Санăн вăл хĕре курасчĕ. Кантăк умĕнчи чечек пекех вĕт. Пĕр кашăк шывпах çăтса йамала.

**Кулине**—Пўвĕ пури хăť?

**Хветĕр**—*Мĕн* каласси пур. Йаштак хулă пекех. Хамран пĕр шит лутрарах та... уншăн ничево. Ик çўç хĕрри кăтра, çўçĕ сарă, куçĕсем вара кăн-кăвак. Сăмси: ни ытла вăрăм мар, ни ытла кĕске мар, так чохă. Тути вара: пĕчĕкĕ, шăратса тунă йĕрĕлче пекех. Праçниксенче пурçăн кĕпе тăхăнаť те, çилпе варкăшаť кăна. Пушмакĕ те çап-çутă: ларт-ларт тутараť. Хăвăн ывăлу пулсан, тўррех çавна илмеле. Тĕнчипе шырасан та ун пек хĕр ес тупас çук.

**Кулине**—Мĕншĕн ес ăна ачине çуратаччен качча илмерĕн?

**Хветĕр**—Аппăшĕ питĕ хайар, теççĕ те... Хĕрĕ ман, çемçе кăмăллăскер. Хам аппана хирĕç кайса, аппана вăрçтарас килмест, тет. Амăшĕ çук. Аппăшĕ тата хама курмасăрах мана тиркесе пăрахнă, тет.

**Кулине**—Кăçалхи çамрăксем ашшĕ-амăшĕсенчен питех те ыйтса тăмаççĕ вĕт ха.

**Хветĕр**—Çапла та... Ак, есĕ илес хĕрех аппăш сăмаххинчен тухасшăн мар.

**Кулине**—Есĕ калашле, пирĕн килни чăнах та иртерех пулчĕ пулас. Тула тухса уçăлас-ха, кунта ытла та шăрăх. (*Кайаť*).

**Хветĕр**—Алтати аппăшĕ мĕскерле-ши? Курса виç сăмах калаçасчĕ. Алтати хăйĕн аппăшне çвидетĕле панă тенĕ. Килетех пуђ те-ха.

**Алтати** (*кĕрет*)—Ашшĕ килсе ларнă иккен, урăх никам та çук. Ну, йурĕ. (*Кайма тăраť*).

**Хветĕр**—Алтати, ан кай ха!

**Алтати**—Мĕн тата?

**Хветĕр**—Лар-ха манпа йунашар! Ан вăтан.

**Алтати**—Санпа пурăнма вăтанмансскер, йунашар лармах вăтанмăпăр-ха. (*Лараť*) Ну, мĕн?

**Хветĕр**—Еп акă мĕнле шухăшлатăп: суд туса пăтраниччен, аťа, пĕрлешер те йурĕ.

**Алтати**—Санпа епĕ ним парсан та пĕрлешместĕп. Мана мăшкăласа пĕтĕм йал-йыш умĕнче намăса кўртрĕн те, халђ манăннах сана качча тухса лармала. Пĕр авланнă çынна кайам та, сан пата ура та йарса пусмастăп.

**Хветĕр**—Неушлĕ епĕ йалта никамран та начар каччă пулса тăтăм-и? Неушлĕ есĕ те йут çынна кайса ман чĕрене çунтарăн-ши? Дуђă!.. Еп сана никамран та ытларах йуратаťăп. Йуратман пулсан еп çумна çыхланман та пулăттăм. Есĕ те ун чухне мана йуратаťăп тетĕнччĕ çке. Есĕ те саватăп теттĕн.

**Алтати**—Савнă та, иртнĕ.

**Хветĕр**—Дуђă, ан асаплантар ес мана. Еп саншăн тем тума та хатĕр. Ес мана ан пăрах çеç.

**Алтати**—Ун çинчен халђ суда килсен мар, кăшт маларах калаçмалаччĕ. Манăн хырăма йулсан ес пирĕн йалтан кайрăн та, çак тарана çитсе те пырса пăхмарăн.

**Хветĕр**—Инкў питĕ хайар теççĕ те... пыма шиклентĕм. Тата çынсем куласран хăрарăм. Еп уншăн сана йуратма пăрахман вĕт. Есĕ ху та айăплă.

**Алтати**—Мĕншĕн?

**Хветĕр**—Ху йавăр çын иккенне мĕншĕн час пĕлтермерĕн? 6 уйăх çитнĕ те, мана тин çырса пĕлтертĕн. Ытлашши палăрман чухне систермелеччĕ те, пĕрлешмелеччĕ çеç.

**Алтати**—Халђ епĕ хама вађђи урăх качча тупнă. Санран пĕре те кайа мар.

**Хветĕр**—Суйатăн пуђ? Игле ха, Дуђă, манăн сан инкупа курса калаçасчĕ. Пайан кунта килет-и вăл?

**Алтати**—Килет. Анчах еп хам инкене санпа пĕр сăмах та калаçтармастăп.

**Хветĕр**—Мĕншĕн, Алтати?

**Алтати**—Сана курсанах, вăл сан çине араслан пек сиксе ларĕ те, пĕтĕм пит-куçне тăрмаласа пĕтерĕ. Пирĕн инке вăл çав тери хайар, çав тери матур. Хамăр йалта ăна çĕнекен пĕр çын та çук.

**Хветĕр**—Апла тума ирĕк ан пар ес, Алтати! Ах, мĕнле унăн кăмăлĕ çавăрăннă тĕле пуласчĕ.

**Алтати**—Сан çине вăл ĕмĕрлĕхех çиленнĕ, кăмăл çавăрнассине пĕре те кĕтмели çук.

**Хветĕр**—Ну, йурĕ! Епĕр те санран кайинех тупмăпăр-ха. Аťа, суд туччĕр, мĕн чухлĕ тўлемелине

тӳлӗп, анчах, сан умӑнтаурӑх пуҫ тайасси ан пултӑр. (*Хӑвӑрт тухса кайат*).

**Алтати** (*хыҫҫӑн чупса*) —Хветӗр... Хветӗр... (*Паузӑ*). Мӗн туса хутӑм-ха еп хама-хам? Савнӑ Хветӗр!.. Ес мана хаљ те ӗлӗкхи пекех йуратат-ши, тесе курнӑҫлантӑм ҫеҫ, Хветӗр! Еп санах пыратӑп. Санах йуратататӑп. Епӗ пӗтӗмпех суйрӑм. Инке те хирӗҫ мар вӗт. Хветӗр, таврӑн. Таврӑн тетӗп. Ҫук, ҫаврӑнса та пӑхмарӗ. Кайрӗ. Урӑх арҫынна качча кайсан вӑл мана сӑмах айӗнчех ҫӳретӗ. Унӑн кӑмӑлӗ нийепле те Хветӗрӗнни пек пулмӗ. Хветӗр качча илсенех мана вӗренме йаратӑп, тетчӗ. Ман капла сакӑр ҫул хут вӗренни ахалех пӗтет. Ҫитес кӗркунне районра аслӑ шкулсене вӗренме кӗме хатӗрленмели курс уҫалат. Хветӗр, мана йуратаканскер, чарса тӑман пулӗччӗ. Ачана пӑхма ватӑ амӑшӗ пур. Ех, ухмах! Хам курнӑҫпах пӗтетӗп пулӗ.

**Верук** (*кӗрет*)—Суд хаљ те пуҫланман-и-ха?

**Алтати**—Ҫук-ха. Асанне, еп хӗр чухнех ача тунӑ пултӑр, санӑн ман телейе ывӑл пулнӑ пултӑр, сан ывӑлу мана качча илнӗ пултӑр, есӗ вара ман ачана пӑхнӑ пулӑттӑн-и?

**Верук**—Сан пек илемлӗ хӗрарӑмӑнне те пӑхмасан, камӑнне пӑхас тата?

**Алтати**—Епӗ те сана виличченех пӑхса тӑрантарса усранӑ пулӑттӑм.

**Верук**—Есӗ апла калатӑн та, манӑн тепле кин пулат ӗнтӗ.

**Алтати**—Санӑн ывӑл ача пур-и вара?

**Верук**—Пур, пур!

**Алтати**—Игле-ха, асанне, мана ҫулӑхса пӗр арҫын ача тутарчӗ те, халӗ ачишӗн мӗн чухлӗ тӳлемелине тӳлетӗп, анчах, еп сана нихӑҫан та качча илместӗп, терӗ те, тухса карӗ.

**Верук**—Сан пек хӗре илмест пулат. Каччине курса хамӑннах питӗнчен сурасчӗ. Есӗ ман ывӑлпа ача тӑвас пулсан, еп сана пӗр сӑмахсӑрах киле ҫавӑтса каймала, ачине те хамах малта йатса пымала.

**Алтати**—Ах, есӗ курасчӗ, асанне, манӑн каччи йепле илемлине! Ҫирӗп, латакаскер... Хулпуҫҫисем тем сарлакӑш. Кӑкри вара, пӗр шит малала тухса тӑрат, хӑй йӗпкӗм хура. Куҫӗсем ҫӑлтӑр пек йалтӑртатаҫҫӗ.

**Верук**—Ха-а! Каснӑ лартнӑ ман ывӑл пекех.

**Алтати**—Кайса шырам-ха еп ӑна, тупайрӑп-и? (*Кайат*).

**Верук**—Пайан сучӗ пулат-ши, пулмаст-ши? Кӗтсе ывӑнтарчӗҫ ӗнтӗ пӗтӗмпех. (*Ларат*).

**Кулине**—(*Кӗрет те нимӗн шарламасӑр ларат*). К-хӗм!..

**Верук** (*хытӑрах*). К-хӗм!..

**Кулине** (*Верукран хытӑрах*)—К-хӗм!..

**Верук**—Есӗ мӗскер ӗсӗрсе манран мӑшкӑласа ларатӑн?

**Кулине**—Ан шӑртланса лар.

**Верук**—Шӑртлӑ ҫынпа шӑртланмасӑр.

**Кулине**—Тивмен тункатана никам та тивмест.

**Верук**—Намӑссӑр, намӑссӑр! Хӗрсемӳ хыҫҫӑн суда килме намӑса пӗлесчӗ.

**Кулине**—Санӑн ывӑлу хыҫҫӑн суда килме намӑса пӗлесчӗ.

**Верук**—Еп суда килмен. Хӗрпе курса калаҫас та, килӗштермеле пулсан, хӗрне илес те кайас тенӗччӗ. Сан пек ҫынран шыраса илме килмен.

**Кулине**—Санран шыраҫҫӗ-и мӗн? Мӗскер чӗлхуна хыҫса ларатӑн.

**Верук**—Ес хыҫмастӑн пуљ.

**Кулине**—Выҫ хырӑмлӑ ҫын хытӑ ҫиленет теҫҫӗ: мӗн—хырӑму выҫа пуҫларӗ-им?

**Верук**—Шуйттан выҫа пуҫларӗ. Йӗкӗлтесе ларха нумайтарах, ак пӗрре сиксе тӑрсан... (*Тӑрат*).

**Кулине**—Епӗр санран кайа йулатпӑр пуљ. Ах, ват кӑрпан!.. (*Тӑрат*).

**Верук** — Епӗ ватти сана канҫӗрлерӗ-и-мӗн? Тфу!.. Намӑса пӗлесчӗ ват ҫынна кӳрентерме. Тфу!.. Тфу!.. Тфу!.. Ҫине-ҫине тфу!.. (*Тытӑҫмах тӑраҫҫӗ*).

**Кулине**—Ак, пӗрре ҫӳҫунтан йарса илсен!..

**Верук**—Хурах!.. Хурах!...

**Кулине**—Хурах кӑшкӑрса кама айӑплас тетӗн? Еп хам та кӑшкӑрма пултаратӑп. Караул!.. Караул!..

**Верук**—Хурах!...

**Иккӗшӗ харӑс**—Хурах!..

(*Хветӗрпе Алтати кӗреҫҫӗ*).

**Хветӗр**—Мӗн хӑтланататӑр есӗр? (*Верука тытса пӗр йенне тӑратат*).

**Алтати**—Ухмаха йӗрмерӗн пуљ те? (*Кулинене тытса тепӗр йеннеле тӑратат*).

**Хветӗр** (*Алтатине кӑтартса*). Акӑ, анне, ман арӑм пуласси, паллашӑр, Алтати тесе чӗнеҫҫӗ.

**Алтати** (*Верука ал тытса*). Питӗ хавас! (*Хветӗр ҫине кӑтартса*). Акӑ, инке, ман упӑшка пуласси, Хветӗр тесе чӗнеҫҫӗ.

**Кулине**—Еси-ха вӑл Кӑҫат Хветӗрӗ текенни? Ак ӑҫта телей! (*Верука*). Ес Хветӗрӗн амӑшех пулатӑн и вара?

**Верук**—Хветӗр амӑшех. Есӗ Алтати инкӗшех пулатӑн-и?

**Кулине**—Алтати инкӗшех.

**Верук**—Ах, тур-тур!.. Каҫарсамах, тӑхлачӑ, пӗрпӗринпе паллашмасӑр кӗҫех вӑрҫса килеттӗмӗр. Каҫарсам!

**Кулине**—Каҫарасси мӗнни... Хама каҫар ӗнтӗ. Йытӑсем пӗр-пӗринпе вӑрҫмасӑр паллашмаҫҫӗ, тет, ҫавӑн пекех пулчӗ ӗнтӗ ку.

**Верук**—Пӗлсе тӑнӑ ҫинчех епӗ сана кӳрентермен пулӑттӑм.

**Кулине**—Кӳрентерессишӗн пулсан епӗр иксӗмӗр те пӗр-пӗринчен йулмастпӑр пулмала. Чӑнчӑн ҫӳпҫипе хупӑлчийех ӗнтӗ.

**Верук**—Хаљ ӗнтӗ тӑватсӑмӑр та ҫӳпҫипе хупӑлчисем пултӑмӑр.

**Кулине**—Урӑх нимӗнле сӑмах та тупса калас ҫук.

**Верук**—Ах, турӑ!.. Кун пек хӗре кам качча илмӗ!

**Кулине**—Пӗлмен, пӗлмен. Кун пек каччӑна кам хӗр памӗ?

**Хветӗр**—Ну, суд ӗҫне пӗтерессичинчен секретар патне кӗрсе каламала пуљ. (*Кӗме тӑрат. Алӑк ҫинче ҫакӑнса тӑракан хута вулат*) „Пайан суд пулмаст, судйесем пурте Шупашкара Главсуда ӗҫпе кайнӑ". Кайччӑрах. Пире текех суд кирлӗ мар. Ну, тӑхлачӑсем, айтӑр киле. Ҫакӑнта суд курма килнисенчен паллаканнисене туйа чӗнсе хӑварӑр. Атӑ, Дуњаша, епӗр кайар!

**Алтати**—Атӑ, Хветӗр!.. (*Ыталашса тухса кайаҫҫӗ*).

**Верукпа Кулине**—Ҫитес ерне кун ӗнтӗ, Хветӗр туйне тума пырӑр, ушкӑнпех! (*Кайаҫҫӗ*).

*Чаршав.*

# Сывлăх никĕсĕ

Ĕçĕ хĕл пуçланас умĕн, „Труд“ хаçатра „Физкуљтурăлă хĕллене хирĕç тухса илесси тесе йат хунă статйа тухнă хыççăн пĕр уйăха йахăн иртсен, пуçланса кайнă.

Шĕвĕр пўрнипе сулахай сăмса шăтăкне уçса ларакан клуб пуçлăхĕ патне Павăл Никитин кĕчĕ те, хăйусăртарахăн чарăнса тăчĕ.

Клуб пуçлăхĕ, кĕнĕ çын çине пăхмасăр, ĕçрен пушă аллипе çтена çине: „Ĕçлеме ан чăрмантарăр!“ тесе çырса çапнă хулăм хут çине тĕллесе кăтартрĕ.

Павăл ўслĕк тухман çĕртенех ўсĕркелесе илчĕ те, шăппăнтарахăн каларĕ:

— Иртнĕ ернере есĕр мана кĕрсе пăхма каланăччĕ те... Тупса паратпăр терĕр.

— Мĕн? Кĕскен кала!

— Йĕлтĕрçĕсен кружокĕ ваљљи...

Клуб пуçлăхĕ шĕвĕр пўрни çумне çыпçăннă темĕскере сĕтел айне пăрахса:

— Татах кĕскенрех кала. Пĕр сăмахпа!—терĕ.

— Йĕлтĕрсем!—тесе хучĕ Никитин татăклăн.

Клуб пуçлăхĕ пуçне сулахай йенеле тайрĕ те, пĕр пек илтĕнсе тăракан сасăпа çапла каласа мăкăртатса илчĕ.

— Физкуљтурă—сывлăх никĕсĕ. Хавшаклăх тĕп пултăр! Декабĕрĕн 2-мĕшĕнче, йункун, тепре килсе пăхăн.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Декабĕрĕн 2-мĕшĕнче Никитин каллех клуб пуçлăхĕ умĕнче тăрат.

Клуб пуçлăхĕ сĕтел хушшинче кĕнекесен хыт хупписем çине темĕскерле пит хăрушă, мăйракалă етемсем ўкерсе ларат. Никитина курсан, вăл, анасласа илнĕ хушăрах çапла каласа хурат:

—Физкуљтурă—сывлăх никĕсĕ. Хавшаклăх тĕп пултăр! Декабĕрĕн 9-мĕшĕнче, йункун, татах тепре килсе пăхăн.

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Декабĕрĕн 9-мĕшĕнче клуб пуçлăхĕ хăйĕн сылтăм хăлхин сухăрне шăрпăкпа тасатса ларнă хушăра каллех Никитин пырса кĕрет.

— А! Физкуљтурă—сывлăх никĕсĕ. Хавшаклăх тĕп пултăр! Йункун, декабĕрĕн 16-мĕшĕнче килсе пăхăн.

— . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Малтанранпа виç уйăх иртет. 4 уйăх... Никитин клуб пуçлăхĕ патне çўреме пăрахмаст. Пĕре вăл ун умне çилĕлĕн пырса тăрса:

— Хăçанчен, а-а-а! Йĕлтĕрсем пулаççĕ-и санăн, пулмаççĕ-и?—тесе кăшкăрса пăрахат.

Клуб пуçлăхĕ, бутерброд чăмласа ларакanскер, шартах сиксе илет. Унтан Никитин патнех пырса тăрса, ăна хулпуççинчен лăска-лăска çапла калат:

— Физкуљтурă—сывлăх никĕсĕ. Хавшаклăх тĕп пултăр! Тепĕр ернерен килсе... Анчах мĕне кирлĕ-ха халĕ йĕлтĕр, а? Чўрече витĕр пăх-ха, çуркунне çитет...

Чăнах та: чўрече витĕр пăхсан кăвак пĕлĕт йар уçă, шăнкăр-шăнкăр йур шывĕсем йухаççĕ, шăнрăрч йурри илтĕнет...

Клуб пуçлăхĕ Никитина лăпланнă сасăпа çапла каласа ăсатат:

— Акă мĕн! Малала пирĕн иксĕмĕрен футбол кружокĕ организацилес ĕçе тытăнмала пулат. Кирлĕ хатĕрсем туйанса парассине хам çине илетĕп...

Малала мĕн пулнине пĕлес пулсан, çак фелйетона тепĕр хут пуçламĕшĕнченех вулама тытăнмала, анчах вуланă чухне „хĕл“ тата „йĕлтĕрсем“ сăмахсем вырăнне „çуркунне“ тата „футбол“ сăмахсем каласа вуламала.

* * *

Физкуљтурă ĕçĕ çине бўрократла пăхса пурăнакансене ĕçсыннисен массисем кирлĕ пек тыткалама пĕлмесен çакăнта сире каласа пани пулма та пултарĕ. Анчах ĕçĕ, тĕрĕссипе каласан, кунта калани патнех çитеймен: виççĕмĕш хут клуб пуçлăхĕ патне пырса кайнă хыççăн, Никитин клуб членĕсен мăн пуххинче клуб пуçлăхĕ çинчен уйрăм ыйту лартса сўтсе-йавма сĕннĕ. Пуху итленĕ. Унта вара клуб пуçлăхне пит хытă пĕçертнĕ. Унтан пĕр кун пурăнсан, йĕлтĕрçĕсен кружокĕнче тăракан клуб членĕсем пурĕш те „Йелтĕрçĕсен маршне“ йурласа уйала тухса кайнине пурте курмăр.

**Йĕлтĕрçĕ И.**

# Ыттисен пек мар

Чăвашиздат коллективĕ кăларакн „За большевистскую книгу“ çтена ха çатран.




Чăвашиздат барометрĕ.

# Ăслă ача

*Çверчков ÿкерчĕкĕ.*



— **Ачам, çакă ĕнтĕ санăн шăлну пулаť. Унпа есĕр туслă пурăнăр. Çемйере туслă пурăнни килĕшет.**

— **Туслă пурăнмасăр. Совет Сойузĕн çемйинче 170 мĕлйун çын пĕрпĕринпе тĕлĕнмеле туслă пурăнаť те, 12 çынлă çемйере туслă пурăнма пултарăпăр-ха.**



Çўлти тĕрре чăваш колхозникĕн кĕпи çинче курма пулаť, айалти тĕрре Турхан йалĕнчи (Хĕрлĕ Чутай районĕ) вулав çуртĕнче куратăн.

ФАШИСĂМ КĂЛЕНДАРĔ



— Кала-ха, Елзă, çу хыççăн мĕн пулаť?
— Кĕр. — Кĕр хыççăн? — Выçлăх.

# Пӳртри ҫӳп-ҫап

## Мăн Сĕнтĕрсен сăнавĕ

Мăн Сĕнтĕрти (Йетĕрне р.) „Комбайн“ колхоз чылай ĕҫсене кăҫал никам кăтартса памасăрах „ҫĕнĕле“ турĕ. Агрономсем хушмасăрах, 0,33 гектар ҫинчи ыраша вырмасăр, авăн ҫапса вăрлăх тумасăр, ҫĕртме сухине сухаламасăр, пĕр ҫынсăр, машинисĕр-мĕнсĕр ҫил пулăшнипе кĕраки акса хăварчĕ. Ҫилĕ вырман ырашăн пĕрчисене силлесе кăларнă та,—акнă. Ĕҫленĕшĕн пĕр ĕҫкунĕ те ыйтман. Кайран Мăн Сĕнтĕрсем пуш хăмăлне пуҫтарса кĕртме 10 ĕҫкунĕ панă. Килес ҫул ҫак ҫилпе акнă ыраш лайăх ăнса пулсан, ӳлĕмрен те ҫапла акма шутлаççĕ.

Хаљ тата вĕсен ҫак таранччен пĕр жнейкă хирте лараť... Ҫилпе акса хăварнă ыраша килес ҫул вырма тесе ĕнтĕ вĕсем жнейкине уйа хăварнă.

Килес ҫул ҫилпе акнă ыраш мĕнле пуласси те, жнейкăпа мĕнле вырасси те паллă мар-ха. Анчах та Мăн Сĕнтĕрсем кахалли такамшăн та паллă.

М. Дангер.

## Такăнса ӳкни

Епĕр каҫ-ҫĕрле Ачакасси (Хĕрлĕ Чутай р.) урамĕпе иртсе пыратпăр. Йĕпи-лаприне тата тĕттĕмне пăхмасăр, урасене йĕпе ҫийĕн шутара-шутарах Ентри тĕлне ҫитрĕмĕр. Сасартăк епĕ Ентри тĕлĕнче, темĕскертен такăнса, пухăнса тăнă ҫăмăр лупашкине чăмрăм. Епĕ ӳкнĕ вырăнта темĕскер ĕнĕрлесе выртаť. Йулташа йатран чĕнтĕм, вăл, мана темĕскерле амак пулнă пулĕ тесе, ним тума аптăраса тăраť. Епĕ ӳкнипе ăна та сирпĕтсе питнекуҫне варланă.

— Санăн спичкă пур-и?—ыйтрăм епĕ.

— Пурҫке.

Вăл спичкă ҫутрĕ. Епĕ ӳкнĕ вырăнга каска йевĕрлĕ йапала выртаť. Ҫул ҫинчи шывлă вырăнта ҫула урлă выртнă.

— Ара, ку пирĕн колхозăн МТФ пуҫлăхĕ Мурлайĕв Петр вĕт,—терĕ ман йулташ. Епĕр тĕлĕннипе шанк хытса тăтăмăр. Ăна урз ҫине тăратма тытăнтăмăр. Анчах вăл вилĕ ӳсĕр выртаť.

— Ех! Мăрли, Мăрли! (Ăна йалта ҫапла чĕнеççĕ). Есĕ ҫапла ӳсĕр выртса ҫӳресех пĕтĕм МТФ ĕҫне йапăхтартăн. Кайса пăх-ха есĕ хăвăн фермуна, унта мĕнле йĕркесĕрлĕх. Ĕнесем санăн чуптараймасăрах йулса пăсăлса кайаççĕ. Нумай пулмасť ăратлă вăкăр вăрманта улăхрах вилчĕ. Унтан малтан ҫавăн пекех сăвакан ĕне вилсе кайрĕ. Тата сысна ҫурисемпе ҫамрăк пăрусем те вилкелерĕç. 4 сысна чылай самăртараххисемех сан ҫине тарăхсах сывлăшĕсене кăларса йачĕç. Апла пулсан сана мĕн чухлĕ выљăх ылханнă,—текелесе епĕр йулташпа килеле утрăмăр.

Игразил.

## Ҫăмăрта

Хирпуҫ йаленчи (Вăрнар р.) „Победа“ колхоз председателĕ ҫырмара ӳсĕр выртнине курсан ыйтрăмăр:

— Йулташ Куҫмин, есĕ мĕншĕн ку ҫырмана кĕрсе вытрăн? Ҫăмăр ҫусан йĕпенетĕн вĕт?

— Ах, мучи, ҫăмăрĕ пулсан тем пекчĕ, вара шывпа йухса, утмасăрах киле ҫитеттĕмччĕ, терĕ.

Филтерми.

## „Тĕлĕнмеле“ ачасем

Епĕ пĕрре Ишлей районне командировкăна карăм, унта мана Тивĕш колхозĕпе паллашма йачĕç. Колхоза ҫитсен, виҫĕ пĕрчĕ сухаллă колхоз председателĕ мана Ҫтапан Хветăрчă бригадирăн 12 ҫул кайалла ҫуралнă Азарийĕпе паллаштарчĕ. Ку чăнах та тĕлĕнмеле вăйлă та, хастар ача. Кун пек нийепле ударник-стахановцă та ĕҫлеме пултарас ҫук. Сăмахран, Тивĕш колхозĕнчи ударниксем иртнĕ ҫулла тăватă кун хушши ҫурăм тăрăх тар йухтарса утă ҫулнă пулин те тăватшар ĕҫкунĕ анчах илнĕ, а паттăр Азари пĕчĕк ҫавипе тăвайккисенче кăшлаттарса 8 ĕҫкунĕ „тунă“. Азари йаланах икĕ ҫыншăн „ĕҫлесе“ пынă. Ку татах тĕлĕнтерекен хыпар мар-ха, ҫак бригадирăннах, те Лиди йатлăччĕ, катăк йĕмлĕ пĕчĕк хĕр ача пур, ку вара чăнахах та виҫĕ ҫыншăн ĕҫлет. Иртнĕ ҫулла Лиди тырă вырса 22 ĕҫкунĕ тунă.

Ахаљ ҫын ачи пуличчен, пирĕн колхозри Ҫтаппан Хветăрчă бригадир ачи пул,—теççĕ унти колхозниксем.

Унтан шĕвĕр йанахлă председател мана колхоз йĕтемми ҫине паллашма илсе карĕ. Унта, малтанах калас пулаť, пурнăҫ йакши, кам мĕнле выљăх апатне мĕн чухлĕ илес килет, айта йара пар киле йăтаť.

Епĕ питĕ тĕлĕнекен ҫын, ҫавăн пеккисем пулсан ҫырса пĕлтерĕр—курма пыратăп.

Ҫавă.

## Шыракансем

Шыракан тупаť, теççĕ. Чăн. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Тури Ҫĕрпӳкасси колхозникĕсем лаша кӳлмеле пулсан, ут хатĕрĕсем ҫур куна йахăн колхозниксен килĕсем тăрăх шыраса ҫӳресен тупаççех.

Анчах вăл колхозра учот ĕҫĕ лайăххине темчул шырасассăн та тупасси пулас ҫук, мĕншĕн тесен колхозниксен ĕҫкунĕсене апрелрен пуҫласа октăбĕрччен те ĕҫкĕнекисем ҫине ҫырса паман.

Колхозниксем ут хатĕрĕсем шыраççĕ, терĕмĕр. Правленире ларакансем мĕн шырани каламасăрах паллă—„Капкăн“ страници ҫине ӳкессе шыранă.

## Тăнран йаракан хут

Çĕрĕç комиссариачĕ çумĕнчи „Сельхозснабжени" кантурĕ Трак районĕн çĕрĕç пайне çĕнтаберĕн 16-мĕшĕнче 4-08-мĕш номерлĕ хут йарса панă. Епĕр ăна чăвашла куçарса пичетлесе паратпăр.

„Молотилкăсене клевĕр çапма йурăхлă тумашкăн сирĕн район валли пĕр лист тимĕр уйăрса хунă. Ăна пирĕн Сельхозснабженин Шупашкарти складĕнче илме пултараттăр.

Колхозсене халех çав тимĕре илме нарйад пама ыйтатпăр".

Хучĕ çине Çельхозснабженин чăваш кантурĕн управляйушчийĕ Шчепельовпа ответлă исполнителĕ Финченко ал пусса йанă.

Çак хута çĕнтаберĕн 20-мĕшĕнче алла илсен, Трак çĕрĕçпайĕн пуçлăхĕ шухăша кайнă:

— Çак вăхăтчен клеверсене çапса пĕтернĕ, темеле (стаханăвла ĕçлеççĕ)—ку пĕр йенчен. Пĕр листа тимĕрпе районра клевĕр акакан 60 колхозăн молотилкисене клевĕр çапма йурăхлă тумала,—ку „Шчепельовла рационализаци" пулаť. Ăçтан тупăннă ун пек хут çыракан „шлепкесем"?—тенĕ.

— Ăçтан? Ара „шлепкесене" акмаççĕ, вырмаççĕ, пухмаççĕ, хăйсемех вĕсем çуралаççĕ.

## Мăйракине хыпашлакан

Çĕрпӳ районĕнчи „Шумашар" колхоз председателĕ Григорйев „растрата туман пулсан, растрата пулман пулĕччĕ те, анчах 463 тенкĕ растрата туни чарчĕ".

Халĕ унтан: укçана хăçан тӳлесе тататăн?—тесе ыйтсан:

— Сыснана мăйрака тухсан,—тет.

Сыснана мăйрака нихăçан та тухмасť, Григорйĕв йулташ! Ĕненместĕн пулсан, хыпашласа пăхха хăвăн çамкуна,—мăйрака тухман вĕт унта. Ай ӳлĕмрех тухасса ĕмĕтленетĕн-и?

## Учитĕл арăмĕ

Вăрмар районĕнче учителре пурăнакан Портновăн арăмĕ Тăвай районĕнчи Нижар йалĕнче пурăнаť.

Йалсовет Портнова хăйĕн арăмне хутла вĕрентме пĕрре мар ӳкĕтленĕ.

Портнов ӳкĕтленĕ хыççăн кашнинчех шухăша кайаť, тет:

— Арăма хутла вĕрентме хушаççĕ. Арăм тени хутла пĕлсен, культурланса кайсан, упăшки культурсăррине сисме пултараť. Тен, епĕ ăна, хĕр чухне те хут пĕлменшĕн йуратнă. Хутла пĕлни пуриншĕн те чăн-чăнах кирлĕ пулсан, ачасем пурте хут пĕлекен пулса çуралĕччĕç, хастарлăраххисем вăтам шкул пĕтернĕ чухлĕ пĕлекенсем те пулĕччĕç...

Портнов йулташ, есĕ Фонвизин çырнă „Недоросль" комедири Скотинин йăхĕнчен мар-и? Скотининсем хутла вĕрентессине те, вĕреннисене те йуратман.

## Суй-суй!

Гиоте каланă: çут çанталăкра тинкерсе пăхаканăн куçĕ сăнаса тупайман вăртăнлăх çук, тенĕ.

„Сунталăн" 8-мĕш номĕрне производствăна ийулĕн 31-мĕшĕнче панă. Икĕ уйăх тытнă хыççăн, типографи, айăпне хăй çинчен сирес тесе, „производствăна çĕнтаберĕн 1-мĕшĕнче панă" тесе кăлараť.

Анчах хăш-пĕр чухне типографи суйнă вăхăтрах сӳтĕлсе кайса хăй суйипе хăйне çапаť:

„Ĕçхĕрарăмĕн" 8-мĕш номĕрне производствăна августăн 15-мĕшĕнче панă, пичете ийулĕн 31-мĕшĕнче йанă" тесе кăлараť (производствăна паричченех пичете йанă!).

Суй, анчах виçине пĕл,—тенĕ авалхи ваттисем пирĕн журналсене пичетлесе паракан Чăвашиздатăн 1-мĕш номерлĕ типографири производствăна йĕртсе пыракансем çинчен.

---

**1937-мĕш çĕнĕ çулта „КАПКĂН" хакĕ кашни уйăхшăн 40-шер пус, çулталăка 4 тенкĕ те 80 пус пулаť. Çырăнса илмесĕр ан йулăр!**

---

Секретарь и вып. редактор *И. ИЛЛАРИОНОВ.* За ответ. редактора *Ф. АЛЕКСАНДРОВ*

Сдано в производство 28/IX—36 г. Подписано к печати 24/XI—36 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 756. Заказ № 1757

Формат бумаги 58×88 1/16 Об'ем 2,5 п. л. Гор. Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза. Тираж 4650. Изд-газ. «Канаш»

# Пĕлĕт айĕн




— Мĕн есĕ, Матруне инке, хăна ху мăнăн тытса сăмсуна каçăртнă?

—Унсăрăн мĕнле вара... Куратăн пулĕ — авă, манăн йуратнă ывăлăм пĕлĕт айĕн килет.